ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

36 (4398) №, 2014, авăн, 4 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ШКУЛА, АЧАСЕМ, ШКУЛА!

## Юрататпăр тĕнчене питĕ хытă...



**Вĕçет хир çиййĕн эрешмен карти,**
**Пахча тулли хăмла, улма та кавăн.**
**Юмахрилле çиçет вăрман çути,**
**Çулçăсене сăрларĕ кĕр çункавĕ.**
**Сисмесĕрех кĕскелчĕ кун утти –**
**Хĕвел çулне тытса пăрасшăн авăн.**
**Çĕн хăмлапа чашăлтатать пичке,**
**Ача-пăча та тытрĕ кĕнеке.**

***Василий Эктел.***

Акă каллех вĕçтерсе çитрĕ çĕнĕ вĕренӳ çулĕ: çĕнĕ кĕпе тумтирпе, ată-пушмакпа, сумка-портфельпе... Тетрачĕ те, ручки-кăранташĕ те вĕр-çĕнĕ. Ара, йăли çапла: çĕнĕ çула яланах çĕнĕлле пуçламалла. Савăнăçлă та капăр тумлă вĕренекенсемпе педагогсем авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче пĕлӳ çуртне хавас кăмăлпа пуçтарăнчĕç. Йăл кулăллă пит-куç, чĕрĕ чечек çыххи – пурте кĕтнĕ уяв çинчен калаççĕ.

Малалла кашниншĕн çĕнĕ пурнăç, çĕнĕлĕх, кĕтменлĕх, йывăр самантсем, ыйхăсăр çĕрсем... Ашшĕ-амăшĕн канăççăр кунĕ-çĕрĕ... Тарăн пĕлӳ каçалăкĕ... Вĕренӳ... Шкул сакки... Кирек епле пулсан та мал ĕмĕтлĕ çамрăксем вĕсене çĕнтереççех!

Çак кун пĕр тăван Юлианăпа Евгения Рубцовăсем те Шупашкарти 2-мĕш номерлĕ вăтам шкула васкарĕç. Асли – иккĕмĕш, кĕçĕнни пĕрремĕш класа кайрĕ.

– Эпĕ класс ертӳçине Светлана Валерьяновна Кедровăна аса илсе питĕ тунсăхларăм. Пĕрле вĕренекенсем те маншăн ют мар. Вĕсемпе курса калаçманни те чылай-çке.Чи савăнăçли – юратнă йăмăкăм та пĕлӳ çуртне çӳреме тытăнни. Пĕлтĕр вăл мана кăшт ăмсанатчĕ. Сумкăна тетрадь-ручка, кĕнеке чикнине курсан: «Килес çул эпĕ те шкул сукмакне такăрлатма тытăнатăп та-ха», – тетчĕ ассăн сывласа. Халĕ вăл та савăнăçлă. Çитменнине Пĕлӳ кунĕнче эпир иксĕмĕр вĕрентекенсемпе вĕренекенсен умĕнче юратнă шкул пирки юрă шăрантартăмăр. Пурне те килĕшрĕ ахăртнех пирĕн пултарулăх, кайран темччен алă çупрĕç. «Маттурсем!» – тесе кăшкăрчĕç. Çакă пире мĕн тери хавхалантарчĕ! – çĕкленӳллĕ кăмăлпа пуплет Юлиана.

Юрра-ташша юратакан пĕр тăвансем малашне сцена çинче кăна мар, вĕренӳре те чи хастаррисенчен пĕрисем пуласса шанаççĕ педагогсем.

➲➲➲ 2-мĕш стр.

1-мĕш стр.

# Юрататтпăр тĕнчене питĕ хытă...



## «Анне, Рубцовсен урамĕ хăш тĕлерех-ши?»

Çичĕ уйăхра çут тĕнчене килнĕ Юлиана калаçма та, утма та час вĕренеймен. «Ах, ку таранччен чĕлхÿ уçăлмалла-ха та. Кашни кун эсĕ мĕн те пулин каласса кĕтетĕп çав», – тенĕ амăшĕ пĕчĕккскере утьăкка сиктернĕ май.

Пĕр кунхине паллакан хĕр арăмăн ачи, Юлианăпа пĕр çулхискер, сăвă хысçăн сăвă шăрантарнине курсан шалт тĕлĕннĕ Ольга Петровна. Тепĕр куннех Агния Барто кĕнекине алла илнĕ, тĕпренчĕкне юнашар лартнă та унти сăвăсене сасăпа вуланă. Пепке ун çине куç илми пăхнă. Пĕр эрнерен çав кĕнекери сăвăсене пăхмасăр шакăртаттарса каланă Юлиана. Чăн та, çакăн хысçăн чĕлхи йăлт уçăлнă хĕр пĕрчин. Аслисене тĕрлĕ ыйтупа анратма тытăннă.

...Пĕр кунхине çемье апата ларнă. Малтан ачисем валли пăтă, унтан хăйне валли пĕçернĕ чăх урисем пырса лартнă сĕтел çине Ольга Петровна. Сасартăк Юлианăн аллинчи кашăкĕ урайне ӳкнĕ.

– Анне, мĕн ку-у-у?! – кăшкăрнă пĕчĕккскер савăт çине куçне чарса пăхнă май.

– Урасем, – ăнлантарнă амăшĕ ăна.

– Тухатмăш карчăкăн-и? – тенĕ пĕчĕккскер шалт тĕлĕнсе.

Çакнашкал кулăшла самантсем татах та пулнă-ха. Троллейбусра пыраканскер халăх умĕнче кăшкăрса янă.

– Анне, анне тетĕп! Çитес чарăну Николаев урамĕ тет вĕт-ха. Пирĕн Рубцовсен урамĕ хăш тĕлерех-ши вара? Питĕ пĕлес килет, – кăсăкланнă пит-куçне пĕркелентерсе.

...Ольга Петровнăн телефонĕ шăнкăртатнă. Калаçса пĕтернĕ хысçăн:

– Ну, шăлтарчĕ-тĕк шăлтарчĕ-ĕ-ĕ! Пĕрех пĕр сăмахне те ĕненмерĕм, – тенĕ такампа пупленĕ хысçăн пуçне пăркаласа.

– Кам шăлтарчĕ? Чăвашсен унашкал сăмах пур-им? Илтмен пĕрре те, – тенĕ юнашарах ларакан мăшăрĕ.

– Пур паллах. Илтмен-им? Тĕплĕнрех каласан... суеçтернине çапла калаççĕ чăвашсем.

Сăмах çине сăмах пулнă май тавлашсах кайнă çамрăк мăшăр. Шăп çак вăхăтра Юлиана чупса çитнĕ те иккĕшĕн умне пырса тăнă.

– Итлĕр-ха! Пирĕн çемьере кам чи ăсли пулнине пĕлетĕр-и эсир?! – сассине хăпартнă пĕчĕккскер.

– Кам? – кăсăкланнă лешсем.

– Эпĕ! Анчах та ку таранччен «шăлтарчĕ» текен сăмаха хăрах хăлхапа та илтмен, – мăнаçлăн çеç хуравланă хăйхискер пуçне каçăртса.

Унтан темрен такăннă та Юлиана урайне сирпĕнсе кайнă. Çук, макăрман вăл. Хăех тăнă та диван çине ларнă.

– Ах, анне, чĕре ыратса кайрĕ. Мĕн тумалла-ши? – тенĕ асаплăн.

Ольга Петровна хăраса ӳкнĕ. Алли-ури çыхланнă.

– Ах, тухтăра чĕнмелле пуль. Чим, хăш тĕлтен ыратать санăн чĕрÿ, кăтарт-ха, ачам, – пĕшкĕннĕ вăл тĕпренчĕкĕ умне.

– Ак кунтан, чĕр куççи тĕлĕнчен, – тенĕ урине сăтăркаласа.

...Сенкер экран уйрăмах илĕртнĕ ăна. Сăмса тутрипе сулкалашса артистсемпе пĕрле авкаланнă. Ача садĕнчен килнĕ чухне те:

– Анне, анне! Эпĕ кунĕпех хитре юрă çырас тесе шухăшларăм. Ĕç ăнчĕ. Акă итле, – тесе мĕн киле çитиччен юрласа пынă вăл.

Пепки юрă-ташă енне туртăннине кура пилĕк çула çитсен Ача-пăча пултарулăх çуртне çавăтса кайнă ăна амăшĕ. «Нюанс» эстрадăпа вокал уйрăмĕнче пултаруллăскере хапăлласах йышăннă. Тăватă уйăх иртсен çитĕнÿ тума тытăннă та Рубцовсен аслă ачи. Тĕрлĕ фестиваль-ăмăртуран пĕрре мар çĕнтерӳпе таврăннă. Халĕ авă унăн çÿлĕкне Кубоксемпе грамотăсем илем кĕртеççĕ.

Амăшĕн тăван ялне Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялне хăнана çÿреме кăмăллать Юлиана. Пĕррехинче, кукамăшĕн çуралнă кунĕнче, чун-чĕререн юрă шăрантарнă.

Хаклă çыннăм, савнă çыннăм,
Сан паян çуралнă кун.
Ĕмĕр-ĕмĕр сывă пурăн,
Эс пуртан юрлать ман чун.
Сар хĕвел паян куратăр,
Иртенпех йăл-йăл кулать.
Вăл та çакă уявпа-тăр
Пĕр сана çеç саламлать.

Хăна-вĕрле темччен алă çупнă. Кукамăшĕ те, Зинаида Петровна, куççуль витĕр мăнукне ыталанă.

– Мана эсĕ пысăк та хаклă парнепе савăнтартăн, тавтапуç! – тенĕ çурăмĕнчен лăпкаса.

...Халĕ Юлианăна пур çĕре те юрлама чĕнеççĕ. Аслă Çĕнтерӳ, Республика тата Хула кунĕсенче те унăн пултарулăхĕпе çĕр-çĕр çын паллашнă.

Хĕр ача вара ӳссен хĕреснамăшĕ пекех дизайнер пуласшăн.

– Паллах, юрра-ташша йăлтах манатăп тенине пĕлтермест ку. Пушă вăхăтра хама сцена кăчăк туртасса пĕлсех тăратăп, – тет Юлиана кăмăллăн.

## «Маня, пăрçа çиес килет-и? Чăт ĕнтĕ тепĕр çулччен...»

Иккĕмĕш ачипе йывăр çын пулсан тухтăрсем Ольга Петровнăна:

– Çут тĕнчене ывăл килме хатĕрленет, – çирĕплетнĕ вĕсем.

Ку хыпар хайхискере хавхалантарнă. «Пĕрремĕшĕ – кĕмĕл, иккĕмĕшĕ ылтăн пулсан лайăхрах. Мăшăр та ывăл кĕтет авă», – тенĕ хырăмне ачашшăн сĕртĕннĕ май. Анчах хĕрех çуралнă.

Хăйсене килĕшекен ят тупайманран пĕр эрнеччен ятсăр пурăннă Рубцовсен ачи. Пĕрремĕш кунне – Полина, иккĕмĕш кунне – Саша, унтан Ариана, Аделина, Ася, Тая, Аня тесе чĕннĕ ăна Ольга Петровна.

– Капла мар-ха... Ача мĕн ятлине пĕлместпĕр вĕт, – тесе çуралнă çинчен ĕнентерекен хут çине Евгения тесе çыртарнă.

Женьăн шăм-шакĕ çав тери çемçешке пулнăран больницăра чылайччен сипленме тивнĕ вĕсен.

– Тем тесен те сирĕн ача пулас гимнастка. Ӳт-пĕвĕ пластилин пек. Алина Кабаева пек пултарулăхĕпе палăрĕ-ха, – тенĕ тухтăрсем çурма шӳтлевлĕн.

Тăваттă тултарсан вăл та аппăшĕпе пĕрле Ача-пăча пултарулăх çуртне çӳреме тытăннă. Уншăн та юрă-ташă чун уççи пулса тăнă.

Ольга Петровна Юлиана валли чăваш кĕпи ятарлă çĕвĕçе çĕлеттернĕ пулсан, Женьăна вара хăех парне тăвас тенĕ.

– «Натали кĕпе тĕрлет, кам валли?» – текен йĕркесене улăштарса çапларах çавăрттарса хумалла çеç. «Улька кĕпе çĕлет. Кам валли? Женя валли», – тесе хăйпе хăй шӳтлесе алла йĕппе çип тытнă. – Чăн та, ачасене пĕчĕкрех чухне нумаях та кирлĕ мар пек. Халĕ шухăшламалли, малашлăх пирки çиччĕ виççе пĕрре касмалли нумай. Вĕсемшĕн тăрăшсах авă хамах сăвăсем çырса юрра хыватăп.

Ĕнтĕ Женя та Юлиана пекех тĕрлĕ ăмăрту-фестивале хутшăнса пĕрре мар палăрнă. Анчах вăл та кайран пурнăçне сценăпа çыхăнтарас ĕмĕтлĕ мар.

– Ветеринар пулатăп! Эпĕ чĕрĕ чунсемсĕр пурăнаймастăп, – пат татса каларĕ вăл мăнаçлăн.

Чăнах, халĕ те кукамăшĕн Маня ятлă качакишĕн, чăххи-чĕппишĕн тунсăхлать. Çуллахи вăхăтра мĕн тери аванччĕ вĕсемпе пĕрле пулма! Курăк кăна мар, пăрса та татса çитеретчĕ Маньăна. Лешĕ ăна курсан хăвăртрах ун еннелле васкатчĕ çав. Эх, тусне ачашласа çупăрланă май шăрантаратчĕ вара Женя хăй юратнă юррине!

Юрататăп тĕнчене питĕ хытă!
Тӳпене те сарă-сарă хĕвеле.
Вĕсемпе анчах чунра ман питĕ çутă.
Савăнар атя, туссем, манпа пĕрле.
Хĕвел пăхтăр ăшăрах,
Çумăр çутăр хытăрах,
Чечексем ешерччĕр халь
Кашни чунра.
Юр-юрлатчăр кайăксем,
Ан хурланччăр аннесем!
Хавас кулă çеç янратăр
Таврара!

Хулана кайма пуçтарăннă чухне, чăтаймарĕ, картише чупса тухрĕ Женя. Ун патне тухасшăн карта алăкне тĕртекен качака патне пырса тăчĕ.

– Пăрçа çиес килет-и? Чăт ĕнтĕ тепĕр çулччен. Ун чухне пăрçине кăçалхинчен те нумайрах, ывçи-ывçипе çитерĕп, – терĕ сухалĕнчен турткаласа.

...Кĕçĕнни аслине çав тери юратать. Шкултан Женя маларах килет те Юлианăшăн çав тери тунсăхланине палăртать.

– Хăçан киле таврăнать манăн пĕчĕк анне, – тесе кантăк умĕнчен кайма пĕлмест.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***

Шупашкар.

**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОРШĂН
Л.ВАСИЛЬЕВА

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1525 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 3319
Пичете авăн уйăхĕн 3-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

Тантăш
36 №, 2014, авăн, 4


# Акă пирĕн каччăсем, ачаранах маттурсем...

Пирĕнтен икĕ кил урлă пурăнакан Вăçça ман пата васкаса килчĕ те сак çине меллĕн вырнаçрĕ. Савăнăçлăн кĕсйинчен кукăль кăларса сăмах чĕнмесĕр ăна çиме тытăнчĕ. Ах, ырă шăршă сăмсана çаплипех кăтăклать! Манăн та çав тутлăскере кăшт та пулин ас тивес килет те... Хыт пăрçа иккен Вăçча! Пĕр çăвар та çырттармасть кукăле. Апла пулсан мĕн тума кунта килчĕ вăл? Ларасчĕ килте, сĕтел хушшинче! Чăтаймарăм, кăшт тĕртсе илес терĕм шыв сыпнă пек лараканскере.

– Вăçча, эсĕ хăвна хăв
Ытла мăнна хуратăн.
Сан пек ула качака
Пурччĕ иртнĕ пасарта, – терĕм ним тăвайман енне.

Кукăль çиме пăрахса ялт! сиксе тăчĕ Вăçча. Питне-куçне пĕркелентерсе урине тăрăст! тапрĕ качака путекки пек.

– Эсĕ епле хăятăн мана çапла калама?! Асаннене евитлесе паратăп! Вăл сана куншăн халех килсе вăрçать! – терĕ тутине тăсса.

– Эх, эсĕ те! Асаннӳпе пурăнатăн, шӳт таврашне ăнланмастăн! – терĕм кулкаласа.

Вăçча тăна кĕчĕ ахăртнех, куççульне шăлса илчĕ те сарă хĕвел пек кулса ячĕ.

– Лисук кайнă пасара
Сысна çине утланса.
Сысни кайнă ĕрĕхсе,
Лисук юлнă сирпĕнсе, – янăрашрĕ вăл пĕр урам.

Эпĕ каллех анне юптарнă сăвă çаврăмне аса илтĕм.

– Вăçча кайнă вăрмана
Хура çырла пуçтарма.
Упа тухнă мĕкĕрсе,
Вăçча килнĕ хăраса, – тăрăхларăм çаплах алăсемпе сулкалашса.

Хайхискер пуçне кăтăрт-кăтăрт хыçрĕ. Ман çине шăтарасла пăхрĕ.

– Анне кукăль пĕçернĕ,
Пĕр кукăлĕ çухалнă.
Кам вăрланă? – тесе ыйтрĕ сасартăк.

Çухалса каймарăм. Хуравне самантрах тупрăм.

– Эсĕ паллах! Ара, хăв аллунтах вĕт кукăль. Апла пулсан мана та сăйла! – терĕм трăнкки-транкки сиккелесе.

Ух, тинех кăмăлĕ çаврăнчĕ Вăççан! Мана та кукăль хуçса пачĕ. Маттур!



◎ Сехет шаккать,
Тукмак анать.
Миçе сехет çывхарать?
Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тваттă...
Пилĕк сехет çывхарать!



◎ Акă пирĕн каччăсем,
Ачаранах маттурсем:
Пĕрремĕшĕ Петĕр,
Иккĕмĕшĕ – Иван.





◎ Хурăн пек яштака пул,
Çулçи пек сарлака пул.
Шăши куртăр – шăхăртăр,
Арлан куртăр – ахăртăр.

◎ Пĕрремĕшĕ – пĕлекен,
Иккĕмĕшĕ – итлекен,
Виççĕмĕшĕ – виçекен,
Тăваттăмĕшĕ – тăрлакан.

*Элиза ВАЛАНС (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# Чиртен хăтăличчен сывлăха упрама çăмăлрах

**Акă çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. Класри тусĕсемшĕн тата ырă кăмăллă вĕрентекенсемшĕн тунсăхланă ачасем каллех парта хушшине ларма хăнăхаççĕ. Хăшĕ-пĕриншĕн вара кăçал пĕрремĕш шăнкăрав янăрарĕ. Ĕнер кăна ача садне çул такăрлататчĕç çак шăпăрлансем. Сиссе те юлаймарăмăр, паян вĕсем – шкул ачисем. Çак çĕнĕ тапхăра хăнăхма, паллах, çăмăл мар. Çавăнпа та ашшĕ-амăшĕ те канăçне çухатрĕ пулĕ. Ача-пăча пĕр вырăнта чылайччен ларма юратмасть-çке. Кунта вара 45 минута тăсăлакан уроксене тӳссе ирттермелле. Юратнă тĕпренчĕкĕн сывлăхĕшĕн пăшăрханакансене тухтăр канашĕсемпе паллаштарас тетпĕр.**

**Мария Михайловна ТОЯБИНСКАЯ, Республикăри Юсав медицинипе реабилитаци центрĕн йĕркелӳпе методика пайĕн методист-тухтăрĕ:**

Вĕренӳ пуçламăшĕ – ача пурнăçĕнчи яваплă тапхăр. Шкула çӳриччен пĕчĕккĕскер хăçан канмаллине, вĕренмеллине, уçăлса çӳремеллине те пĕлмест вĕт-ха. Аслисем уншăн пĕтĕмпех шухăшласа хураççĕ. Анчах часах унăн пĕтĕм йĕркене хăйĕнех хăнăхса çитме тивет.

Ку ӳсĕмри ачан нерв системи хальлĕхе йĕркеленсех çитеймен-ха. Çавăнпа та унăн **кун йĕркине** çирĕплетмелле. Яланах пĕр вăхăтра сыйăрма выртмалла тата тăмалла. Ирхи гимнастикăна тата çăвăнма (пит-куçпа алăсене çума, шăл тасатма, урасене валли ванна хатĕрлеме) хăнăхмалла. Ача сывă ӳстĕр тата лайăх вĕрентĕр тесен ăна тĕрĕс апатлантармалла. Пĕчĕкшерĕн час-часах çимеллине пĕлтĕр вăл. Тата, паллах, шкул ачин вăхăтпа пĕлсе усă курмалла.

Хуть те мĕнле кун йĕркинче те тĕп сĕнӳ пур: ĕçпе канăва тĕрĕс черетлентермелле, апатланупа тутлă ыйхă çинчен те манмалла мар. Темĕнле çанталăк пулсан та ачан кунне икĕ сехет уçăлса çӳремелле. Уçă сывлăш сывлăха çирĕплетет, ӳт-пĕве писĕхтерет.

Халĕ ачан **ĕç вырăнĕ** çинчен калаçар. Çыру сĕтелĕ кирлех. Ăна вырнаçтарнă чухне ачан çӳллĕшне шута илмелле. Çакна мĕнле пĕлмелле-ха? Ача ларнă чухне унăн чавси сĕтелтен 2-3 см аяларах пулмалла, пуканĕ вара чĕр куççипе танлашмалла.

Сĕтеле чӳрече патне вырнаçтарнă чухне тимлĕ пулăр: çутă сулахай енчен ӳктĕр. Каçхине урок тума вара кун çути вырăнне 75 Вт лампа лартăр. Вăл куçа ан шартартăр. Сĕтел çийĕ çутатса якатнăскер е кантăкпа витнĕскер пулсан унăн çути куçа лексе сиенлетĕ. Ун пек чухне сĕтел çине пысăк хут сарсан аван. Куçпа кĕнеке е тетрадь хушшинче 30-35 см пулмалла.

Парта хушшинче тӳрĕ лармалла, çурăмпа пукан хыçне перĕнмелле, пуçа кăштах малалла таймалла. Алăсем сĕтел çинче ирĕклĕн выртчăр, чавсасем çакăнса ан тăччăр, ура лапписем урайне лекчĕр. Пукан сĕтел хушшине 3-5 см чухлĕ кĕтĕр.





Тĕрĕс ларма ача хăй тĕллĕн те хăнăхма пултарать. Çакна тĕрĕслеме чавсасене сĕтел çине лартмалла, пӳрне вĕçĕсемпе тăнлава çитмелле, кăкăрпа сĕтел хушшинчен вара чышкă тухса çӳремелле.

Телекурăм çинчен. Кунне 25-30 минут çеç телевизор пăхма юрать. Экрана урлăлла виçетпĕр те çав хисепе 5 çине хутлатпăр. Шăпах çавăн чухлĕ сантиметр пулмалла ачапа телевизор хушшинче. Компьютертан та асăрханмалла. Цивилизацин çак асамлăхĕпе мĕн чухлĕ сахалрах хутшăнатăр, куççемшĕн çавăн чухлĕ лайăхрах. Ун умне телевизор курас вырăнне çеç, 25-30 минутлăх ларма юрать. Куçпа монитор хушшинче 70 см пулмалла. Çутă пӳлĕм çинчен ан манăр. Компьютер умĕнче тӳрĕ лармалла.

Аслисем, асра тытăр! Ачана ырă тĕслĕх кăтартни – вĕрентĕвĕн чи тухăçлă мелĕ.

## Вĕренĕвĕн пĕрремĕш çулĕнче ачана мĕнле хăрушлăх кĕтет?

Миопи (куç çывăхрине кăна курни), гастрит, çурăм шăмми кукăрăлни. Малалла вара невроз чирĕ пуçланать, физкультурăпа тăхтавсенче ăнсăртран аманма пулать.

***Çывăхрине кăна курни*** – куç чирĕсенчен чи анлă сарăлни. Ун хыççăн – инçетрине çеç курни тата астигматизм (тĕтреллĕ курни). Çакна компьютер е телевизор умĕнче чылайччен ларнипе, вĕренӳре куçа йывăр килнипе тата тĕрлĕрен электрон теттепе вылянипе сăлтавлама пулать. Çемьере аслисенчен хăшĕ те пулин япăх курни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ача куç хĕссе пăхнине, кĕнекене ытла та çывăх тытнине, куç ыратнишĕн канăçсăрланнине асăрхасан пĕр тăхтамасăрах ăна тухтăр патне илсе каймалла.

**Мĕнле асăрханмалла?**

Ачапа пĕрле кашни кунах куç гимнастикине пурнăçламалла. Мĕнле хăнăхтару тумаллине окулистпа канашлăр.

Шкултан килсен пĕр сехетрен çеç урок тума ларма юрать.



Компьютер умĕнче çур сехетрен ытла вăхăт ирттермелле мар.

***Гастрит.*** Уншăн Helicobacter pylori бактерине айăпламалла. Вĕренӳ е кăмăл-туйăм енчен йывăрлăх тӳссе ирттерекен, шкулта йĕркеллĕ апатланман, чипс е кулач кăна сыртакалакан ача гастритпа чирлеме пултаракансен пĕрремĕш ретне лекет. Вăл хырăмра газ пуçтарăннипе, ăш пăтраннипе е какăрнипе асапланать пулсан – гастроэнтеролог патне кайма вăхăт çитнĕ.

**Мĕнле асăрханмалла?**

Апатлану йĕркине пăхăнмалла.

Килти апата нимĕн те çитмест.

Ачан вар-хырăмĕ çуллă, тĕтĕмленĕ, ăшаланă тата йӳçек апат-çимĕçе хальлĕхе йывăррăнтарах чăтса ирттернине ан манăр.

Пыр хĕртни палăрсанах тухтăр патне васкамалла.

***Çурăм шăмми кукăрăлни.*** Çакăншăн йăлтах сĕтел хушшинче тĕрĕс мар ларни, йывăр портфель тата тĕрĕс мар суйланă ранец, унран та хăрушăрахххи – пĕр хул пуççирен çакмалли сумка, сахал хускану туни тата çурăм мышци çирĕп пулманни айăплă.

**Мĕнле асăрханмалла?**

Утнă чухне ача çурăмне тӳрĕ тыттăр, хул калаккисене хыçалалла çавăртăр, хырăмне туртса кĕртгĕр, пуçне каçăрттăр.

Кресло çинче е выртнă çĕрте урок тума юрамасть, сĕтел хушшинех лармалла.

Шкул ачин ятарлă ортопеди матрасĕ çинче çывăрсан аванрах.

Спортпа физкультура – сывă кĕлетке çăл куçĕ!

***Респиратор инфекцийĕсем.*** Хупă тата пăчă пӳлĕмре нумай ача пуçтарăнсан, вентилятор çутсан тата сайра-хутра çеç уçăлтарсан вируссем ачасене пĕрпĕринчен куçма пултараççĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрин шкула килнĕ чухнех е сăмси юхать, е ӳслĕк аптăратать вĕт-ха... Ку вара час-часах чирлекен ачашăн, вăл унччен ача садне çӳремен пулсан пушшех те, питĕ хăрушă. Çакна çирĕп иммунитетлисем çеç тӳссе ирттерĕç.

**Мĕнле асăрханмалла?**

Алăсене тăтăшах супăньпе çумалла, килте мар чухне вара дезинфекцилекен татăксемпе усă курмалла, пите хура алăпа перĕнмелле мар.

Иммунитета çирĕплетмелле. Шăнса пăсăлнин малтанхи паллисем сисĕнме пуçласанах е чиртен сывалса çитмесен шкула камалла мар.

Нумай чиртен асăрханмалли сĕнӳсем пĕрешкелтерех: иммунитета çирĕплетмелле, тĕрĕс апатланмалла, кун йĕркине пăхăнмалла, чылай хускану тумалла. Паллах, нумай тăрăшмалла. Уншăн вара пурнăç сире çирĕп сывлăхпа савăнтарĕ.

# Хӑюллӑ та тавҫӑруллӑ Люся



(Вӗҫӗ.
Пуҫламӑшӗ 34-35-мӗш номерсенче.)

## «Пичче, кайӑр!»

... Ҫӗрле такам алӑкран вӑйлӑ шаккарӗ. Григорий вырӑн ҫинчен сиксе тӑчӗ те минтер айӗнчен пистолетне кӑларчӗ.

– Ҫакна Николая е унӑн юлташӗсене парӑр. Кунта – документсем, листовкӑсем... Чӳречерен тухса кайӑр, – пӑшӑлтатса каларӗ Татьяна Даниловна.

– Эсир вара?..

– Пичче, кайӑр! – илтӗнчӗ Люся сасси. – Вӗсем часах вирхӗнсе кӗрӗҫ!

...Акӑ гитлеровецсем Татьяна Даниловнӑпа Люсьӑна автомат приклачӗсемпе тӗккелесе картише илсе тухрӗҫ. Амӑшӗ хӗрне хӑйӗн ҫумне пӑчӑртаса тытӑрӗпе хупларӗ. Вӗсем хыҫҫӑн пӗр гитлеровец пичетлемелли машинка, тепри радиоприемник ҫӗклесе тухрӗҫ. Виҫҫӗмӗшӗ куҫлӑхлӑ вӑрӑм офицер патне чупса пычӗ те темӗн каларӗ, унтан... Хунар ҫутинче Люся галстук асӑрхарӗ. Хӑйӗн пионер галстукне, ӑна Нина Антоновна вожатӑй ҫыхса янӑччӗ. Люся офицер патне ыткӑнчӗ:

– Пар! Ҫӗлен!

Анчах ӗлкӗреймерӗ... Фашист Люсьӑна тапса ураран ӳкерчӗ.

– Партизанен! – кӑшкӑрса ячӗ те нимӗҫ хӑйӗн чӗлхипе темӗн хушрӗ. Амӑшӗпе хӗрне машинӑна тӗксе кӗртрӗҫ...

Григорий Смоляр ҫакна пӗтӗмпех курчӗ, анчах нимӗн те тӑваймарӗ. Икӗ теҫетке чухлӗ гитлеровеца вӑл пӗччен те ҫӗнтерӗччӗ-ха, енчен те унӑн аллинче ҫичӗ патронлӑ пистолет мар, автомат пулсан...

## Мӗн чухлӗ сахалрах пӗлеҫҫӗ, ҫавӑн чухлӗ лайӑхрах...

Татьяна Даниловнӑпа Люсьӑна 88-мӗш пӳлӗме хупрӗҫ. Унта хӗрарӑмсен йышӗ аллӑран та каҫнӑ ӗнтӗ. Вӗсем – Минскри вӑрттӑн организацире тӑракансен арӑмӗсем, тӑванӗсем. Тин кӑна кӗнисене вырӑн пачӗҫ.

– Ларӑр, – терӗ ҫӳллех мар, хура ҫӳҫлӗ хӗрарӑм. – Урара тӗрӗслӗх ҫук.

Ӑшӑнас тесе Люся амӑшӗ ҫумнерех лӑпчӑнчӗ.

– Сире вара мӗншӗн? – ыйтрӗ хӗрарӑмсенчен пӗри.

– Хулана пропусксӑр тухнӑшӑн, – терӗ Люся. Амӑшӗ кӑшт кӑна кулса илчӗ – ашшӗ мӗн хушнине хӗрӗ лайӑх ас туса юлнӑ: тӗрмере эсӗ мӗншӗн ларнине мӗн чухлӗ сахалрах пӗлеҫҫӗ, ҫавӑн чухлӗ лайӑхрах. Гестаповецсем вӑрттӑн йӗрлевҫе кӗртсе яма та пултараҫҫӗ вӗт-ха.

## Тӗрмери малтанхи тата юлашки куҫҫуль

Темиҫе кунтан Татьяна Даниловнӑна ыйтса тӗпчеме илсе кайрӗҫ. Люся амӑшӗ хыҫҫӑн ыткӑнчӗ, анчах ӑна конвоир кӑнттаммӑн тӗксе хӑварчӗ. Хӗр ача цемент урай ҫине ӳкрӗ. Ун патне пурте хисеплекен Надежда Тимофеевна Цветкова, Петр Михайлович Цветков вӑрттӑн коммунист арӑмӗ, пычӗ.

– Лӑплансам, хӗрӗм, – терӗ вӑл шӑппӑн. – Лӑплансам. Кирлӗ мар...

Ку Люсьӑн тӗрмери малтанхи тата юлашки куҫҫулӗ пулчӗ. Урӑх вӑл нихӑҫан та йӗмен.

Икӗ сехет иртрӗ. Ҫак вӑхӑт Люсьӑшӑн ӗмӗрпе танлашрӗ. Тинех алӑк уҫӑлчӗ те – Татьяна Даниловнӑна ҫавӑтса кӗчӗҫ. Вӑл стена ҫумне тӗршӗнчӗ. Ҫи-пуҫне ҫурса пӗтернӗ, ҫӗтӗк витӗр кӗлетке ҫинчи хӗненӗ хыҫҫӑнхи юнлӑ йӗрсем курӑнаҫҫӗ. Люся амӑшӗ патне ыткӑнчӗ те ӑна ларма пулӑшрӗ. Никам та нимӗн те ыйтмарӗ. Хӗрарӑмсем сӑмахсӑрах вырӑн пачӗҫ.

Акӑ каллех алӑк уҫӑлчӗ.

– Люся Герасименко! Ыйтса тӗпченӗ ҫӗре!

Хӑйне чӗннине хӗр ача малтанах ӑнланмарӗ.

– Люся, сана калаҫҫӗ, – терӗ Надежда Тимофеевна.

– Турӑҫӑм! Чӑттӑрччӗ ҫеҫ вӑл, – пӑшӑлтатрӗ Татьяна Даниловна.

## «Хуравла! Хуравла! Хуравла!..»

Хӗр ачана тӗттӗм коридорпа илсе кайрӗҫ, темӗнле алӑкран тӗксе кӗртрӗҫ. Хӗллехи ҫап-ҫутӑ хӗвел шевлисем тӳрех куҫа тӑрӑнчӗҫ.

– Хӗр ача, ҫывӑхарах пыр, – илтӗнчӗ такамӑн ҫепӗҫ сасси. – Ан хӑра.

Чӳрече патӗнче ахаль тумтир тӑхӑннӑ ҫӳллех мар ҫын тӑрать. Вӑл Люсьӑна тимлӗ сӑнать.

– Мӗнле-ха эсӗ ҫав тери хӑюсӑр? Ҫакӑнта лар, – пукан ҫине кӑтартрӗ. – Акӑ канфет. Илсе ҫи. – Ҫав ҫын хитре арчана кӑштах шутарчӗ.

Хӗр ача малтан пӗр купа канфет ҫине, унтан хӑйне сӑйлакана пӑхса илчӗ. Мӗн чухлӗ курайманлӑх унӑн куҫӗнче! Леш ҫынни те хутланнӑ пекрех пулчӗ, сӗтел хушшине ларчӗ те ҫапла ыйтрӗ:

– Кала-ха, пичетлекен машинкӑна сире кам панӑ?

– Вӑрҫӑччен туяннӑччӗ.

– Радиоприемник вара ӑҫтан?

– Ҫӗмрӗк вӑл. Арчи анчах...

– Сирӗн пата кам пырса ҫӳретчӗ?

– Такам та...

Ыйтса тӗпчекен «чӗрӗлсех кайрӗ».

– Ячӗсене, хушамачӗсене кала. Вӗсем сирӗн патра мӗн тӑватчӗҫ?

– Алик, Катя, Аня... Эпир пуканелле выляттӑмӑр. Алик хушамачӗ – Шурпо, Катьӑн вара...

– Эпӗ вӗсем ҫинчен ыйтмастӑп! – тарӑхса кайрӗ хайхискер. – Аслисенчен кам? Мана ҫавна кала!

– Аслисенчен?.. Никам та килмен.

– Суятӑн!

Ҫав ҫын сӗтел хушшинчен вирхӗнсе тухрӗ те хӗр ачана питӗнчен ҫапма пуҫларӗ.

– Хуравла! Хуравла! Хуравла!

Люся шӑпӑртах. Гестаповец ӑна пушӑпа хӗнесе ҫӳҫне тӑпӑлтарсан та, урипе таптасан та пӗр сӑмах та каламарӗ.

...Камерӑна вӑл урисене аран-аран шутарса, анчах пуҫне каҫӑртса тата кӑштах кулса кӗчӗ. Ҫак кулӑ мӗн тери асаплӑ тухнине пурте асӑрхарӗҫ.

## Кунтан тухма пӗр ҫул кӑна

Татьяна Даниловнӑпа Люсьӑна кашни кунах чӗнтерчӗҫ, вӑйлӑ хӗнерӗҫ. Пӗррехинче вара камерӑна тӑнне ҫухатнӑ Люсьӑна кӗртсе пӑрахрӗҫ. Хӗрарӑмсем ӑна асӑрханса сак ҫине вырттарчӗҫ. Ӑш-чикӗ ҫунса тухатчӗ. Чӑтмалла мар ӗҫес тата ҫиес килетчӗ. Пӗр пӗчӗк ҫӑкӑр татӑкӗ те пулин. Чи пӗчӗккине. Арестленисене нимӗн те ҫитерменпе пӗрех – кунне вунӑ кашӑк темӗн шӗвекӗ лекет...

Тата питӗ ҫывӑрас килет. Камерӑра арестленисем туп-туллиех. Ҫурма ларса, пӗр-пӗрин ҫумне тӗршӗнсе ҫӗр каҫма тивет. Вӑйсӑррисемпе чирлисем кӑна сак ҫинче выртаҫҫӗ.

– Кунтан тухма пӗр ҫул кӑна пирӗн, тӑванӑмсем – вилӗм, – илтӗнчӗ Люсьӑна такам пӑшӑлтатни. – Пӗр ҫул...

Ҫук, тепӗр ҫул та пур. Фашистсене мӗн пӗлнине йӑлтах каласа памалла. Вара пурӑнӑн, ҫийӗн, ҫывӑрӑн, кӑвак тӳпене курса киленӗн, хӗвел ҫинче хӗртӗнӗн, чечек пуҫтарӑн. Мӗн тери юратать-ҫке Люся чечексем хушшинче ҫӳреме! Ҫуркунне вӑрман уҫланкинче ҫеҫпӗлсем тухаҫҫӗ, ҫулла вара пӗтӗм уй-хир шӑнкӑрав курӑкӗпе хупланать...

– Кирлӗ мар чечек, – пӑшӑлтатаҫҫӗ хӗр ачан ҫурӑлса пӗтнӗ тутисем. – Кирлӗ мар! Аттепе юлташӗсем ирӗкре пулинччӗ! Вӗсем унта пулсан фашист составӗсем сывлӑша ҫӗкленӗҫ, каҫсерен пӑшал сасси илтӗнсе тӑрӗ. Минск пурӑнӗ, кӗрешӗ.

– Аташать пулмалла, – терӗ те такам Люся патне пӗшкӗнсе юнпа ҫыпӑҫса ларнӑ ҫӳҫне ачашларӗ.

Люся пуҫне ҫӗклесе хӑй аташманнине пӗлтересшӗн, анчах пуҫӗ йывӑрлансах ҫитнӗ, пӗтӗм кӗлетке ҫунса тухать.

Пӗррехинче, Люсьӑна каллех ыйтса тӗпчеме илсе кайнӑ чухне, коридорта арестленӗ ар ҫынсене хӑвалатчӗҫ. Вӗсен йышӗнче хӗр ача Александр Никифорович Дементьева аран-аран палласа илчӗ. Унпа танлашсан Люся пӑшӑлтатрӗ:

– Аттене курсан калӑр, эпир аннепе иксӗмӗр сӑмах та вӗҫертмерӗмӗр...

Александр Никифоровичпа тӗл пулнӑ хыҫҫӑн темиҫе кунтан Люсьӑпа Татьяна Даниловнӑна япалисемпе пуҫтарӑнма хушрӗҫ, тӗрме картишне илсе тухрӗҫ. Хӗллехи хӗвел ҫутине шеллемест. Питӗ сивӗ. Анчах Люся та, амӑшӗ те ҫакна асӑрхамарӗҫ. Фашистсем вӗсене хура машина патне илсе пычӗҫ. Эппин, персе пӑрахма илсе каяҫҫӗ.

– Путсӗрсем! Ачана та пулин хӗрхенӗр! – кӑшкӑрса ячӗ Татьяна Даниловна. Ыттисем те кулянса ӳкрӗҫ.

– Шнель! Шнель! – янӑрарӗҫ гитлеровецсем арестленисене машинӑна хӑваласа кӗртнӗ май. Хӗр ача тимӗр пусма тӑрӑх васкамасӑр хӑпарчӗ, пӗр шикленӳсӗрех малалла утрӗ...

Люся Герасименко пурнӑҫӗ ҫапла татӑлчӗ.

*А.Н.Печорская ҫырнине*
*Лариса ПЕТРОВА куҫарнӑ.*



# Сăвăпа чĕрем юрлать

## Чечек ӳстеретĕп

Эпĕ хамăн йăмăкпа
Чечек акрăм пахчара.
Ҫум ҫумлатăп кунсерен,
Хĕпĕртетĕп чĕререн –
Шăтса тухрĕҫ чечексем,
Тĕрлĕ-тĕрлĕ тĕслисем.
Илем кӳчĕҫ таврана,
Савăнтарĕҫ чунăма!

***Рена АНАНЬЕВА.***

Канаш районĕ,
Вăрăмпуҫ шкулĕ.



*© Лена ГАЛКИНА (Сĕнтĕрвăрри районĕ, Шĕнерпуҫ) ӳкерчĕкĕ.*

## Пулăра

Пĕрре вăйлă шывпала
Пĕве кайнă татăлса.
Юлташсемпе пухăнса
Тухас терĕмĕр пулла.

Ҫитрĕмĕр те вырăна
Куҫ-пуҫ кайрĕ чарăлса:
Ав тем чухлĕн ҫырана
Тухнă пулăсем юхса.

Эх, пуҫтартăм пĕр витре,
Савнăҫ килчĕ чĕрене.
Ман хаваслă сăн-питре
Кулă тупрĕ вырăнне.

***Ольга АЛЕКСАНДРОВА.***

Канаш районĕ,
Вăрăмпуҫ шкулĕ.

## Пирĕн урам

Пирĕн урам сарлака,
Такăр вăл тата яка.
Ача-пăча, эх вара,
Хĕвĕшет ҫак урамра.
Мухтанатăп хам ялпа,
Чапай ятлă урампа.
Вăл ҫĕкленĕ чапланса,
Командира хакласа.

## Кайăк хурсем

Хĕвел кăмăл турĕ –
Ăшăтрĕ чуна.
Ҫитрĕ кайăк хурĕ
Пирĕн таврана.
Тӳпере вĕҫеҫҫĕ
Уҫăн сас парса,
Кикак-кикак теҫҫĕ
Хавхалантарса.

***Снежана ЯКОВЛЕВА.***

Канаш районĕ,
Вăрăмпуҫ шкулĕ.

## Ирхи хĕвел

Эп вăраннă-вăранман
Курах кайрăм кантăкран:
Хĕвел тухнă тӳпене,
Ăшăтать вăл тĕнчене.



Анчах хĕвел тӳперен
Пур ҫĕрте пĕр пек пăхмасть.
Кайса курăр Ҫĕпĕре,
Хĕл унтан часах каймасть.

***Инесса ФЕДОРОВА.***

Канаш районĕ,
Вăрăмпуҫ шкулĕ.

## Анне

Кĕске ҫӳҫлĕ, хăмăр куҫлă,
Ылтăн алăллă анне,
Питĕ ăслă, пултаруллă.
Турă патăр телейне!

***Наталия НИКОЛАЕВА.***

Канаш районĕ,
Вăрăмпуҫ шкулĕ.

## Юратнă ҫыннăмăра

Эпир виҫҫĕн пĕр тăван
Питĕ туслă-ҫке ялан.
Пирĕн анне чи хитри,
Сăпайли те маттурри.
Ирхине ирех тăрать,
Ĕҫлеме вăл юратать,
Пепкисемшĕн тăрăшать,
Вĕсенче телей курать.

***Анастасия АЛЕКСЕЕВА.***

Канаш районĕ,
Вăрăмпуҫ шкулĕ.

## Асăмрах ман кукаҫи

Вăрҫă шавĕ кĕрлет таврара,
Тăван ҫĕрĕм чĕнет пулăшма.
Ҫемьерен, ял-йышран уйрăлса
Кукаҫи каять юнлă вăрҫа.

Икĕ хĕрĕ тĕршĕннĕ ҫумне,
Кĕҫĕннине тытнă ытамне,
Мăшăрне ҫупăрланă ҫемҫен:
«Таврăнатăп, Ульхаҫăм, кĕтсем,
Ачасемшĕн тĕрек эс пулсам,
Йывăр кун иртессе ан мансам».

Шăппăн куҫҫульленнĕ хĕрĕсем,
Ал сулса ăсатнă ашшĕне.
«Турăпа эс ҫаврăнса килсем», –
Кукамайăм шăлнă куҫҫульне.

Ҫирĕп тытнă алне автомат,
Вăл унпа тăшмана пĕтерет,
Тăван ҫĕршĕн ăна тавăрать,
Ачисен пурнăҫне хӳтĕлет.

Вăрҫă шавĕ кăштах лăпланать,
Кукаҫи те ҫыру шăрҫалать.
Пĕрех ĕмĕт ялан пуҫĕнче,
Ҫирĕп шухăш кашни йĕркинче:

«Тĕп тăвасчĕ хаяр тăшмана,
Таврăнасчĕ киле ҫĕнтерсе...»
Таврăнмарĕ салтак каялла,
Вилнĕ хучĕ ун ҫитрĕ килне.

Иртрĕ вăхăт чылай унтанпа,
Пур пĕрех тупнă кукаҫине:
Ав, Можайск ҫумĕнчи пĕр ялта
Вил тăпри халь упрать ун ятне.

Паттăр пулнă-ҫке ман кукаҫи –
Татнă йывăр суран кун-ҫулне.
Асăнса кукамайăн ҫӳҫҫи
Халь упрать орденне, медальне.

Кукаҫи ячĕпе мухтанатăп,
Эп упратăп ун числă ятне.
Тăрăшсах-ҫке шкулта ăс пухатăп
Ӳстермешкĕн ҫĕр-шывăн чапне!

***Анна ПАВЛОВА.***

Канаш районĕ,
Вăрăмпуҫ шкулĕ.

## Чĕнӳ

Ҫӳлти хур кайăк ҫулĕ чĕнет инҫе-инҫе...
Пулас пек телей ҫулĕ вăл туйăнать пире.
Ҫулне пĕр ҫухатмасăр кайăкĕсем пĕрле
Шав малалла вĕҫеҫҫĕ. Тен, вăйĕ – пĕрлĕхре.



Карти-карти хур кайăк вĕҫет те ҫулсерен
Илсе килет ҫĕн варкăш пĕрле вăл инҫетрен.
Ҫунат сулса чĕнеҫҫĕ пĕрле ҫӳлте вĕҫме.
Епле вĕсем пĕлеҫҫĕ поэт чунне сисме?

Ҫак чĕнĕве Ухсай та итленĕ-ҫке самай,
Хурсен ҫулне сăнанă ҫӳле пăхса пĕрмай.
Вара вăл ҫунатланнă, поэзи – чĕрере,
Чăваш тĕнчи вырнаҫнă йăлтах ҫак кĕвĕре.

Юрра хывса вĕҫтернĕ, ҫитернĕ тӳпене,
Ҫич хĕлĕхлĕн янратнă поэт хăй сăмахне.
Сăмахĕ пултарайнă тупма чăн хăватне,
Вара ҫӳлте пĕрлешнĕ хур кайăк ҫулĕпе.

***Екатерина ИВАНОВА.***

Элĕк районĕ,
Чăваш Сурăм шкулĕ.

## Ҫулла

Питĕ лайăхчĕ ҫулла –
Кунĕпе вылямалла.
Вăхăт ҫук килте ларма,
Чун туртать-ҫке урама.

Ак вылятпăр тытмалла,
Хыҫҫăнах – волейболла.
Пĕр вырăнта ларма ҫук
Чупас, выляс килнĕ чух.

## Куян

Пур килте пирĕн куян –
Килсе пăх, хăвах куран.
Ҫиет симĕс купăста.
Вăл пит вăйлă, пит ăста.

Сиккелет ҫеҫ кунĕпе,
Эх, тапать-ҫке урипе.
Вăйлă юратать мана –
Купăста паракана.

## Кушак

Манăн пур хитре кушак,
Пĕчĕкрех-ха вăл пăртак.
Юратать-ҫке выляма,
Урамра чупкалама.
Лăпланмасть вăл кунĕпе,
Туслă манăн кӳршĕпе.
Питĕ лайăх-ҫке кушак,
Пĕчĕкрех кăна пăртак.

## Шăллăм

Ман юратнă шăллăм пур –
Эс ăна, тархасшăн, кур.
Выляма та юратать,
Урама часах тухать.

Шăллăм манăн пит маттур!
Ун машина, трактор пур.
Вĕсемпе вылять ялан.
Пырса кур, хăвах куран!



*© Катя КОШЕЛЕВА (Йĕпреҫ районĕ, Ҫăкалăх) ӳкерчĕкĕ.*

## Пукане

Илсе пачĕҫ пĕр кунне
Мана пысăк пукане:
Хитре, сарă ҫӳҫлине,
Ҫутă кăвак куҫлине.

Патăм эп пуканене
Чăваш ячĕ – Селиме.
Лайăх унпа выляма,
Ҫутă куншăн савăнма!

***Ольга АБРОСИМОВА.***

Тутарстан,
Аксу районĕ,
Кивĕ Саврăш ялĕ.

# Пĕчĕк ялсен шăпи

Манăн тăван ялăм вăрман варринче вырнаçнă. Йĕри-тавра – çут çанталăк ырлăхĕ. Çырла-кăмпа, вут-шанкă нумай, ĕçлеме анчах ан ӳркен.

Пурнăç çулсеренех улшăнса пырать. Эпир вĕреннĕ чухнехипе танлаштараймастăн. Шкулсем çутă та пысăк. Классене çут çанталăк газĕпе ăшăтаççĕ. Компьютер, интернет – пурте пур. Лавккана кĕрсен куç-пуç алчăрать. Укçу кăна пултăр. «Темĕн те сутаççĕ, аттепе анне çес çук», – теççĕ ун пек чух.

Тупăш тăвас тесен чĕрĕрех пулма хушать паянхи пурнăç. Ямăттине кĕтсе лармалла мар, ĕçлемелле, çукран пур тума тăрăшмалла. Паянхи пурнăç шыв юххи пек таçтаваскать, йăвашшине тата хăюсăртараххине хăйĕнпе пĕрле çавăрса илсе каять. Ура çинче çирĕп тăракан, паллах, çак юхăмран тĕрĕс-тĕкелех тухма пултарать.

Лайăххи патне туртăнни аван-ха. Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрте пурăнатпăр, анчах ырă пулăмсемпе пĕрле чуна ыраттараканни те нумай-çке. Укçа чул каснă вăхăт пулнă май пурнăçăн тĕпĕртетсе тăракан урапинчен ӳксе юлас мар тесе кăмăлсипет енчен те улшăнтăмăр, тăван халăхăн ырă енĕсене сухатса усалли патне алă тăсма пуçларăмăр. Япăххине тума ăс кирлĕ мар. Вăл çумра кĕтсех тăрать. Ялан таçта васкатпăр, пĕри тепринчен ӳксе юласшăн мар.

Унтан та хăрушши – пĕчĕк ялсен шăпи, малашлăхĕ. Юлашки икĕ çулта кăна пирĕн çĕр-шывра миçе пин ял пĕтни, малашлăхсăр юлни пирки калаçаççĕ. Çак шăпа тата миçе пин яла пырса лекет-ши? Иртнĕ ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче патшалăх çĕнĕрен те çĕнĕ ял уçма ирĕк панă пулсан халĕ вĕсем сӳнсе пыраççĕ. Пирĕн ял та çавăн пеккисен шутне кĕрет пуль тетĕп. Мĕншĕн тесен çĕнетӳ тапхăрĕнче ĕç вырăнĕсем юлмарĕç, завод пĕтрĕ. Халăх – ĕçсĕр. Çавна май ялти çамрăксем тымарсене татса хулана вырнаçма васкарĕç.

Ашшĕ-амăшĕ калаçнинчен çакă паллă: пĕри те хăйĕн ачине яла хăварасшăн мар. Мĕн тумалла кунта? Ĕç çук. Мĕн çисе пурăнмалла? Ача сачĕ те çук. Çамрăксемпе пĕрле пулас çемьесем çухалчĕç. Пĕчĕк ялсенчи шкул шăпи те шухăшлаттарать. Ачасем сахал çуралаççĕ, вĕсем те пулин кайран ялтан тухса каяççĕ. Классенче те йыш пĕчĕк. Район центрне тухса çӳреме – хĕрĕх çухрăм. «Шкул пĕтсен ял пĕтет», – тетпĕр. Паллах, ун чухне мĕншĕн юлмалла-ха çамрăкăн яла? Пурнăç лайăхланса пырать, унпа пĕрлех авалхи тымарсене тататпăр, кăклатпăр. Аманнă тымар типет, чĕрĕ юлсан та нушаллă аталанать... Эпĕ тăван шкулта ĕçлеме пуçлани кăçалхипе çирĕм пиллĕкмĕш çула кайрĕ. Юлашки вăхăтра ачасен йышĕ чакни пăшăрхантарать. Çĕнĕ çемьесенче икĕ ачаран ытлашши çуратасшăн мар. Патшалăх çемьери иккĕмĕш ачашăн пысăк пулăшу парсан та виççĕмĕшне, тăваттăмĕшне çуратакан сахал.

Тăван ялăмра шкул малашне те пуласса ĕненес килет.

Малалла чуна канăçсăрлантаракан ыйтăва çамрăксене хуравлаттарас терĕм. Вĕсен шухăшĕпе паллашар-ха.

***Юлия КОШЕЛЕВА, вĕрентекен.***

Йĕпреç районĕ,
Çăкалăх шкулĕ.



Тăван шкул – ачалăх сăпки. Манăн шухăшпа, унта эпир хамăра тупса тĕрĕс-тĕкел пурнăç çулĕ çине тăратпăр. Вĕрентекенсем пулăшнипе хамăр ума лартнă тĕллевсене пурнăçлама, ĕçчен те тавçăрулла пулма вĕренетпĕр, хурипе шуррине уйăрма хăнăхатпăр. Шел пулин те, тăван шкулăмра ачасен шучĕ çулсеренех чакса пыни сисĕнет. Çăкалăх çамрăкĕсем çемье çавăрса ялтан тухса каяççĕ, хуласенче тĕпленеççĕ. Пирĕн тăрăхра çав тери аван, анчах ялти пурнăç кăвайчĕ пĕчĕккĕн сӳнсе пырать. Çавăншăнах ĕнтĕ пĕчĕк шкулсене хупаççĕ. Анчах пирĕн тăрăха кун пек шăпа çитмессе шансах тăратăп. Ача-пăча сасси, шăв-шавĕ тăван Çăкалăх шкулĕнчен кайма ан пĕлтĕр.

***Катя АЛЕКСАНДРОВА,***
***ЧПУ, медицина факультечĕн студентки.***



Кăçал эпĕ 11-мĕш класа çӳреме пуçлатăп. Шкул çинчен лайăххине кăна калама пултаратăп, мĕншĕн тесен вăл пире çын пулма, хамăра тытма тата шухăшлама вĕрентет. Çăкалăх шкулĕнче тĕлĕнмелле лайăх та пултаруллă вĕрентекенсем ĕçлеççĕ, йывăр чухне ялана пулăшаççĕ, вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймannисене ăнланма тăрăшаççĕ. Анчах та юлашки çулсенче ача шучĕ чакнипе шкул шăпи нумайăшне пăшăрхантарать. Ĕç вырăнĕ çуккипе çамрăксем кунта юлмаççĕ, çемьесем куçса каяççĕ. Ялта – çын, шкулта – ача юлманнипе пĕрех. Юмахри пек илемлĕ вырăнта ача-пăча сасси, ĕç шавĕ майĕпенех те майĕпенрех илтĕнни, паллах, чуна хытах ыраттарать. Анчах та ял малалла та кун çути курассине, шкул малалла та ачасене пĕлӳ парассине шансах тăратăп. Мĕншĕн тесен пĕр çын ĕмĕрĕ кăна пурăннă тăван ялăн халех сӳнмелле пек туйăнмасть. Патшалăх енчен пулăшу, ĕç вырăнĕсем, тăрантармалăх шалу пулсан çамрăксем ялтан каймĕччĕç. Ĕç пулсан ар сынсем те çемьепе пĕрле пурăнĕччĕç. Пăхатăн та, çуллахи вăхăтра пур йывăр ĕçе те хĕрарăмсемпе ачасем тăваççĕ. Аттесем çемьене тăрантарассишĕн ĕçлеме кайнă. Кун пек тӳнтерле ӳкерчĕк пирĕн патра кăна мар, пĕтĕм çĕр-шывĕпех. Преступлени тăвасси те, ача-пăча йăнăш çулпа каясси те çакăнтан килмест-ши? Пĕр енчен лайăххи патне утатпăр, тепĕр енчен лайăххипе пĕрле синкерлĕ ĕç тăватпăр. Манăн шухăшпа, патшалăхăн çак пулăма пысăк тимлĕх уйăрмалла. Ĕç пулсан ял пурăнать, ял пулсан шкул малашлăхĕ сӳнмĕ. Манăн тепĕр икĕ йăмăк пур. Вĕсем кайран ăçта вĕренесси пирки те пăшăрханатăп. Юратнă шкулăм малашне те вăрăм ĕмĕрлĕ пултăрччĕ. Хăйĕн юратăвĕпе, пултарулăхĕпе вăл малашлăха тивĕç.

***Катя КОШЕЛЕВА.***

Çăкалăх шкулĕ.

# Амăшĕн хăюлăхĕ

Кайăк та чĕппине сыхлать, амăшĕ те ачине пурçук йывăрлăхран çăлса хăварма тăрăшать. «Амăшĕ» тесенех ялан пĕр пулăм аса килет. Ун çинчен мана анне каласа панăччĕ. Вăл вара асаннерен пĕлнĕ.

...Вăрçă вăхăчĕ пулнă. Килĕрен киле выçлăх çӳренĕ. Çемьене мĕнле тăрантарасси пурне те шухăша янă. Вăрçăн чи хăрушă енĕ вăл – ачасен вилĕмĕ. Выçлăха пула мĕн чухлĕ пепке çут тĕнчерен вăхăтсăр уйрăлнă! Нимĕнле айăп çук вĕтĕр-шакăр çăвара яма пĕр пĕрчĕ те тупайманран çĕр айне кĕнĕ. Хăйсен тĕпренчĕкĕсене сыхласа хăварас тесе темĕн те пĕр шухăшласа кăларнă амăшĕсем.

Кулинесен килĕнче те çимелли юлман. Мăшăрĕ аякра, вăрçă хирĕнче Тăван çĕр-шывшăн кĕрешнĕ. Виçĕ ачине хăрушă вилĕм аллинчен çăлса хăварасси канăç паман хĕрарăма. Пĕр кунхине яшка пĕçерме хатĕрленнĕ вăл, анчах килĕнче нимĕн те çук, йăлтах пĕтсе çитнĕ. Çапах та Кулине пуçне усман. Вучаха хуранпа шыв çакнă, унта чул янă. Ачисене вара яшка пиçессе кĕтме хушнă. Хăй часах килме шантарса тухса кайнă. Ачисем яшка вĕренине пăхса ларнă те амăшне кĕтсе илеймесĕрех ыйха путнă.

Йывăрлăхра пĕр вырăнта тăма юраманнине аван пĕлнĕ çамрăк хĕрарăм. Кĕлеткӳне лĕнчĕр ярсан урăх çĕкленейместĕн-çке. Пĕрре пĕшкĕнсен тепре вăй илме çав тери йывăр. Йĕри-тавра пĕр çăлăнăç курман Кулине Сăр урлă каçма шухăш тытнă. Унта вырăссем пурăннă. Вĕсен çĕрĕсем аслă, уй-хирĕ вĕçĕ-хĕррисĕр. Хайхискер ял-ял тăрăх ыйткаласа çӳреме пуçланă. Çăкăр ыйтман вăл, ĕç кирлĕ пулнă ăна. Ширакан тупать тет. Чăнах та, пĕр ялта кĕтӳçе вырнаçма май килнĕ. Ĕç пирки калаçса татăлсан хуçа хĕрарăма çул çине çăкăр парса янă.

Киле таврăнсан хуран çумĕнчех çывăрса кайнă ачисене курсан куççульленмесĕр ниепле те тӳсеймен Кулине. Ку вăл – савăнăç тата вăрçă йывăрлăхĕн куççулĕ.

***Андрей ШОРНИКОВ.***

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Атнар.

Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.


Шупашкар 2014

***Кăçалхи юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче Шупашкарта Пĕтĕм тĕнчери спорт форумĕ пулĕ. Ăна Раççей Президенчĕн Хушăвĕпе килĕшӳллĕн йĕркелеççĕ. Форум вăхăтĕнче 24 мероприяти ирттерме палăртнă. Тĕп вырăнта виçĕ ыйту: пĕрлештернĕ командăсем валли спорт резервĕ хатĕрлесси, массăллă спорта аталантарасси (ГТО комплексĕ те çав шутрах), пысăк спорт мероприятийĕсем ирттересси.***

***Шупашкар – «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума йышăнакан пиллĕкмĕш хула. 2009 çулта çак хисепе Хусан тивĕçнĕччĕ, 2010 çулта – Мускав, 2011 çулта – Саранск, 2012 çулта – Якутск.***

***«Форума Чăваш Республикинче ирттерме йышăнни регионта физкультурăпа спорт çӳллĕ шайра аталаннине çирĕплетет», – тет республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев. Вăл калананинчен çакă паллă: форума Раççей Федерацийĕнчен тата ытти 20 çĕр-шывран пурĕ виçĕ пине яхăн çын хутшăнма кăмăл тунă.***

***2013 çулта республика физкультурăпа спорт тĕлĕшĕнчен тăрăшса ĕçленĕшĕн «Раççей регионĕ» номинацире Раççей правительствин премине тивĕçнĕ. 2012 çулта вара Пĕтĕм Раççейри смотр-конкурсра Чăваш Ен иккĕмĕш вырăна тухнă.***

# Чăваш Ен форума хатĕрленет

**Виталий МУТКО, РФ спорт министрĕ:**



«Тӳрех калас килет, ку тăрăха Президент ăнсăртран суйламан. Юлашки çулсенче Чăваш Республики физкультурăпа спорта аталантарассипе лайăх ĕçленине асăрханă вăл. Кунта пурлăхпа техника бази аван, физкультурăпа тата спортпа хатĕрленме тивĕçлĕ условисем пур, сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансен шучĕ ӳссех пырать. Спорт резервне хатĕрлес йĕркене сĕнетпĕ, ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсен пурлăх бази çителĕклĕ, республика тăтăшах çĕр-шывăн наци командисен йышне кĕрет. Тата чи кирли, юлашки вăхăтра çак республика пысăк спорт форумĕсемпе турнирĕсен центрĕ пулса тăчĕ. Çавăнпа Владимир Владимирович Путин «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума Шупашкарта ирттерме палăртрĕ».

**Вăтăр пин ытла ача спорт шкулневаскать**

Паянхи куна Чăваш Республикинче 52 спорт учрежденийĕ, вĕсенчен 41 – Ачасемпе çамрăксен, 11 – Олимп резервĕн ятарлă шкулĕсем. Кăçал вĕсем пурĕ вăтăр пин ытла ачана йышăнчĕç. Вĕренекенсенчен кашниех спортра пысăк çитĕнӳ тăвайман та вĕсем унпа туслашни, сывлăхне тата ӳт-пĕвне çирĕплетни паха.

Ачасемпе çамрăксене физкультурăпа спорта явăçтарасси – Чăваш Ен спорт министерствин чи пĕлтерĕшлĕ ĕçĕ.



Пĕлтĕр республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Патшалăх советне çырнă Çырăвĕнче çитес виçĕ çулта кашни иккĕмĕш шкул ачине спорта явăçтарма тĕллев лартнине пĕлтернĕччĕ. Çавăн пек шкулсен пурлăхпа техника базине лайăхлатма республикăри хуласемпе районсенчи физкультурăпа спорт комплексĕсене ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсене панă. Унта ачасем тӳлевсĕрех хатĕрленме пултараççĕ. Анлă сарăлнă спорт тĕсĕсем: çăмăл атлетика, ишев, ирĕклĕ кĕрешӳ, йĕлтĕрпе чупасси тата футбол.

**«Сокол-2001» – кĕмĕл призер**

Çурла уйăхĕн вĕçĕнче Çĕнĕ Шупашкарта «Сокол» пăр аренинчи çинче регионсем хушшинчи хоккей турнирĕ иртнĕ. Унта 2001 çулта çуралнă арçын ачасем хутшăннă. Турнира республикăри хоккей 4-мĕш шкулĕ 20 çул тултарнине халалланă. Вăл çуллахи хатĕрленĕве пĕтĕмлетнĕ.

Чăваш Енри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсенчен («Сокол-2001», «Сокол-2000» – Çĕнĕ Шупашкар), Мари Эл Республикинчен («Спартак» – Йошкар-Ола) тата Чулхула облаçĕнчен («Мотор» – Заволжье, «Темп» – Кулебаки, «Саров» – Саров) пурĕ улттă команда хутшăннă.

Çĕнĕ Шупашкарти «Сокол-2001» команда Йошкар-Олари «Спартак» хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăннă. Заволжье хулинчи «Мотор» вара виççĕмĕш вырăна тухнă.

Çĕнтерӳçĕпе призерсене медальсемпе, кубоксемпе тата Хисеп хучĕсемпе чыслань. Çак хастарсем вара ятарлă ята тивĕçнĕ: Никита Емельянов («Спартак») – чи лайăх бомбардир, Константин Григорьев («Спартак») – чи лайăх хапхаçă, Алексей Мазей («Мотор») – чи лайăх хӳтĕлевçĕ, Максим Щербаков («Сокол») – чи лайăх тапăнакан, Павел Симонов («Сокол») – чи пĕлтерĕшлĕ вылякан.



**КОНКУРС!**

## «Çул-йĕр правилисем çамрăк çуран çӳрен куçĕпе»

пултарулăх ĕçĕсен республика конкурсĕ



Кăçалхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа авăн уйăхĕн 25-мĕшĕччен «Çул-йĕр правилисем çамрăк çуран çӳрен куçĕпе» пултарулăх ĕçĕсен республика конкурсĕ пырать. Ăна Чăваш Республикин ачасемпе çамрăксен вулавăшĕн тата Елена Светлая çыравçăн «Чăваш Енĕн çамрăк çул çӳренĕсем» проекчĕпе килĕшӳллĕн, «ЛУКОЙЛ» уçă акционер обществин пулăшăвĕпе ирттереççĕ.

Конкурса шкул çулне çитмен тата шкула çӳрекен вун пилĕк çултан кĕçĕнрех ачасем тата аслисем (номинацисемпе килĕшӳллĕн) хутшăнма пултараççĕ.

**Ĕçсене çак темăпа хатĕрлемелле** – çул-йĕр правилисем, ачасене çул çинче суранланасран асăрхаттарасси.

**Конкурс номинацийĕсем:**

Ачасем валли (вунă çултан кĕçĕнрех, вун пĕр çултан вун пиллĕкчен):

– Ӳкерчĕк;

– Литература хайлавĕ (юмах, калав, сăвă, кулăшла заметкăсем, тупмалли юмахсем, такмаксем т.ыт.те);

– Алăпа ăсталанă япаласем;

– Ача садне, «Манăн хăрушлăхсăр çул» шкула çитмелли маршрут хучĕ.

Аслисем валли:

– Чи лайăх сценари;

– Чи лайăх мероприяти;

– ÇÇХПИ çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăха пропагандăлассипе ĕçлекен чи лайăх инспектор.

Ĕçсене кăçалхи **авăн уйăхĕн 25-мĕшĕччен** хăвăр пурăнакан вырăнтан инçех мар вырнаçнă ача-пăча вулавăшĕсене кĕртсе пама пултаратăр:

– Чăваш Республикин ачасемпе çамрăксен вулавăшĕ (**Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Шупашкар районĕсем, Çĕнĕ Шупашкарпа Шупашкар хулисем**);

– Элĕкри ача-пăча вулавăшĕ (**Элĕк, Вăрнар, Йĕпреç, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне районĕсем**);

– Патăрьелти ача-пăча вулавăшĕ (**Патăрьел, Канаш, Комсомольски, Шăмăршă, Елчĕк районĕсем, Канаш хули**);

– Çĕрпӳри ача-пăча вулавăшĕ (**Куславкка, Вăрмар, Çĕрпӳ, Тăвай районĕсем**);

– Çĕмĕрлери С.Я. Маршак ячĕллĕ ача-пăча вулавăшĕ (**Улатăр, Пăрачкав, Çĕмĕрле районĕсем, Улатăрпа Çĕмĕрле хулисем**).

Конкурса 2014 çулхи юпа уйăхĕнче, «Çул-йĕр азбуки» хăрушсăрлăх эрнинче пĕтĕмлетĕç.

Конкурс йĕркипе тĕплĕнрех Чăваш Республикин ачасемпе çамрăксен вулавăшĕн сайтĕнче **http://www.chuvrdub.ru** – «Чăваш Енĕн çамрăк çул çӳренĕсем» баннерта, «Конкурссем» пайра паллашма пулать.

*Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

Луиза ВАСИЛЬЕВА калавĕсем

# Кĕлпи

Аннепе ĕçрен таврăннă чух çырмара кушак çурине асăрхарăм. Ăна тытма тătăм çеç – анне хирĕçлерĕ.

– Килте те çичĕ кушак. Унпа тата мĕн тăватăн? – терĕ алăран кап! ярса тытса.

Ĕсĕклесе аннепе юнашар утрăм. Пўрте кĕрсен те пĕчĕкскере аса илсе макăртăм.

Кайран, пурте сенкер экран умне вырнаçсан, тухса чупрăм çырмана. Пасăрхи вырăнтах ларать мĕскĕн. Мана курсан хирĕç ыткăнчĕ. Хĕве чикрĕм. Ниçта кайса кĕрейми мăрăлтатать!

Пўрте кĕтĕмĕр. Никам сисиччен мăр-мăрпа кăмака çине улăхса лартăмăр. Хайхискер хĕврен тухрĕ те кăçатă çине майлашăнса ларчĕ. Таçтан тупăнчĕ Мурка, сиксе ларчĕ пĕчĕкскер çине. Шуйхашатпăр кăна. Пурте çитрĕç пирĕн пата. Мурка тарса çухалчĕ. Эпир тусăмпа кăна ларса юлтăмăр.

– Хайхи ку çырмари-çке. Мĕн тума илсе килтĕн? – шăтарасла пăхрĕ анне ман çине.

– Капла кашниех урамран пĕр кушак çури илсе кĕрсен ферма пулать! – вĕчĕрхенчĕ аппа та.

– Чимĕр-ха, мĕн-ма манăн юратнă мăнука сăпса пек çулăхатăр? Ара, ачи юратать кушаксене. Ним усалли те тумасть-çке, – сасартăк хута кĕчĕ çăм арласа ларакан асанне.

Никам та пĕр сăмах чĕнмерĕ. Вара кăмака çинчен антăмăр. Кĕлпин хырăмĕ выçнă пулас, тўрех тĕпелелле вĕçтерчĕ. Ун хыççăн эпĕ. Тĕнче! Хăш вăхăтра сĕтел çине хăпарма ĕлкĕрнĕ вăл! Тарăхрăм. Ара, хайне хĕрхенсе пўрте илсе кĕтĕм те, авă мĕн хăтланать. Шеллемесĕрех çапрăм мунчалапа. Вăшт çеç шифоньер хыçне пытанчĕ. Юрать çывăхра аппа пулмарĕ, кăларса ывăтатчĕ хитрескере урама. Кирек епле пулсан та тусăма путсĕрле ĕçсем тума пăрахтармалла. Анчах мĕнле?

Тепĕр кунне килте асаннепе кăна юлсан мăрмăра тăн кĕртме шухăшларăм. Ăна пиçиххипе тенкел çумне кăкарса хутăм. Апат памарăм. Икĕ сехет иртсен ирĕке ятăм çеç, каллех сĕтел çине чалт! сиксе хăпарчĕ. Мĕнле кушак пулчĕ ку? Тупата, нихăçан та тăранма пĕлмест пулĕ вăл. Кĕçех сĕт ярса патăм. Хырăмĕ пичĕке пек çавракa пуличченех çирĕ. Шăп çав вăхăтра чўречерен такам шаккарĕ. Чупса пытăм. Асанне. Картишe тем тума чĕнет. Тухрăм.

– Çак витрене Нинук аппуна леçсе пар-ха. Эрне каяллах сĕт илсе килнĕччĕ. Хамăн вăхăт çук. Вылььăхсене пăхмалла, – терĕ пушă савăта мана тыттарса.

Хыпаланса кайса килтĕм Нинук аппа патне. Унтан пўрте кĕтĕм. Сĕтел çинче каллех Кĕлпи хуçаланать. Çўлĕк çинчи кĕнекепе петĕм тарăхнăран. Хытах лекрĕ пулас, çухăрса ячĕ. Ярса тытрăм тепре, вĕтелерĕм пиçиххипе. Тарчĕ тĕп сакайне.

Мĕн тумалла кунпа? Кăларса ярас – шел. Сурăхсемпе витере усрамалла мар-ши? Пурăнтăр хĕлле çавăнта. Ара, килти мăр-мăрсем пĕрре те апла хăтланмаççĕ вĕт.

Акă тĕп сакайĕнчен тухрĕ Кĕлпи. Ним пулман пекех ман çума пырса ларчĕ те мăрăлтатма тытăнчĕ. Хурантан какай татăкĕ илсе сĕтел çине хутăм. Тусăм тутлă япалана сисрĕ пулас, ниçта кайса кĕрейми макăрма тытăнчĕ. Эпĕ юри кăмака хыçне пытантăм. Вăрттăн сăнама тытăнтăм.

Тем пек çиес килсен те, çук, хăпармарĕ тусăм какай патне. Çур сехет иртрĕ пулин те. Нивушлĕ вырăна лартрăм ăна? Ĕненес килмест.

Уйăх сисĕнмесĕр иртрĕ. Тусăм пысăкланчĕ. Урама тухса çўрекен пулчĕ. Маттур. Сĕтел çине хăпарас йăла çук.

Кашни кун вăл Мурка çурисем валли шăши тытать. Мурка хăй темшĕн ўркенет вара. Уншăн авă Кĕлпи тăрăнса каяслa ĕçлет.

Асанне те юратать ăна.

– Маттурскер, ахаль лармасть пĕрре те, – тет ун çине кăмăллăн пăхса.

Паян пўрте чупса кĕтĕм. Кĕлпи хăй вырăнĕнче питĕ кăмăллăн çывăрнине курсан тăпах чарăнтăм. Тытса юратас килчĕ. Ара, шăши тытса ывăннă ĕнтĕ ĕçченскер. Вăрантăр-ха тусăм, вара кунĕпех йăтса çўрĕп.

# Анук мыскари

Ĕнер кўршĕсем хайсен пепкине пирĕн пата каçса ячĕç. Хайсен хăнана каймалла тет-и? Аппа савăнсах илсе юлчĕ вĕсен ачине. Ара, хамăрăн ун пек пĕчĕкки çук та. Эпĕ те, кĕçĕнни, улттă тултарса çичче кайрăм та манпа халĕ никам та вылясшăн мар. Анук вара иккĕре çеçха, калаçма пĕлмест, хăлаçланахăлаçлана тем ăнлантарать.

Килти кушаксем унран самантрах тарса пытанчĕç. Ĕнсисенчен ярса илет те хăй. Пĕри, хăюллăраххи, Анука питĕнчен чавса илчĕ. Тытăнчĕ лешĕ сĕрлеттерме! Чараймастпăр вĕт.

– У-у-у! – тет вăрманти упа пек.

Пылак кучченеçсем парсан та, пуканесемпе илĕртсен те лăпланма пĕлмерĕ пирĕн хăна. Аптăранă енне ăна аппа йăтса çўрерĕ. Усси пулмарĕ. Вара тарăхнă енне диван çине лартрĕ. Шăпăрлан пушшех кўренчĕ ахăртнех – чăмăркка кăтартрĕ. Эй, тĕнче! Шит тăршшĕ те ўсеймен-ха хăй, авă мĕн хăтланать. Сĕтел çинчи сăн ўкерчĕксен альбомне курсан тин чарăнчĕ. Кутăн!

– Эсĕ ăна асăрхакала-ха. Эпĕ унччен урама юлташсем патне тухса кĕрем. Нумай тăмастăп, – тесе аппа самантрах куçран çухалчĕ.

Халĕ Анук чĕнсен те çаврăнса пăхмасть. Шăпăрт çеç сăн ўкерчĕксем пăхса ларать. Çав вăхăтра ыйхă пусрĕ, чăтаймарăм, вырăн çине тўнрĕм.

Кăштахран шăпăрлан ахăлтатса кулнăран вăранса кайрăм. Мĕн амакĕ? Кам култарать ăна? Ун-кун пăхкаларăм, анчах пўртре никама та асăрхамарăм. Чимха, диван çинче ларакан Анук мĕнпе кăсăкланать? Патне пытăм та – кăшкăрса макăрас килчĕ. Анук сăн ўкерчĕксене пурне те юрăхсăра кăларнă.

Акă эпĕ аннепе ўкерттернĕ сăн ўкерчĕк. Манăн икĕ куçăма та ручкăпа чиксе шăтарнă. Янах çине сухал та лартса янă. Мĕн, мана вăл ар çын тесе шухăшлать-им? Сарă çўçе хуратнă. Аннене те самаях нушалантарнă. Урисене хачăпа каснă, хăлхисене клейпа çыпăçтарнă.

Аппана тата мĕншĕн курайманши? Парта хушшинче ларакан сăн ўкерчĕке çурса ваклaнă. Ну, çак ĕçшĕн ăна мар, мана лектереççĕ халĕ. Паянхи пек ас тăватăп: аппан сăн ўкерчĕкне илес тесе анне кўршĕрен кивçен ыйтрĕ. Акă мĕн туса хучĕ халĕ кĕтмен хăна! Чим-ха, чим! Пиччерен кулнă тăк, кулнă! Вăл – шакла. Иккĕри ача темерĕн... Кам вĕрентнĕ ăна çапла пуçтахланма. Ашшĕ-и е амăшĕ?

Тĕлĕнсе тăнă вăхăтра алăк уçăлчĕ те, аппа кĕрсе тăчĕ. Пўртре мĕн пулса иртнине самантрах ăнланчĕ вăл.

– Мĕншĕн чармарăн? Е вăй çитереймерĕн-и? – чĕтренсе ыйтрĕ хайхискер манран.

Пĕр айăп çук пулсан та çĕр тĕпне анса каяс килчĕ.

– Ха-ха-ха! – терĕ хĕр ача диван çинче автан пек тапăртатса.

Аппа ăна йăтса урайне ячĕ. Лешĕ каллех кутăнлашса макăрма тытăнчĕ. Нумай шухăшласа тăмарăм, Анука çавăтса кравать еннелле утрăм. Куçне сăтăркаларĕ те вăшт çеç хăпарса выртрĕ унта. Хăвăртрах çывăрса кайтăр тесе куçĕнчен вĕртĕм.

Кĕçех ĕçрен Таиç аппа таврăнчĕ те урай сĕрме пуçăнчĕ. Пирĕн тĕле çитсен:

– Ачамсем, ас тăвăр, кравать айне кĕретĕп, – асăрхаттарчĕ ăшшăн пупленĕ май.

Çав вăхăтра çухалнă аппа таçтан тупăнчĕ. Кравать çине хăпарса качака путекки пек тăрăст-тăрăст сикрĕ.

– Ах, пуççăр хăвараççĕ ку ачасем! Пĕтрĕм! – кăшкăрса ячĕ Таиç аппа.

Çак сăмахсене илтсен аппа вăшт çеç картишелле тухса сирпĕнчĕ. Куç хупса иличчен мана йĕпе мунчала лекрĕ те.

– Ан пуçтахланăр тесе каласа тăратăп, вĕсем пур кутăнла хăтланаççĕ, – сассине хăпартрĕ мăн акка.

– Эпĕ мар ăна, – ăнлантарма тăрăшрăм самантрах.

– Тата кам? – тарăхрĕ вăл çаплипех пуçне сăтăркаласа.

Паянхи ĕçсемшĕн йăлтах аппа айăплă. Мĕн тесе çын ачине илсе юлмаллаччĕ унăн? Ăна пула сăн ўкерчĕксемсĕр юлтăмăр, сăлтавсăрах патак та çирĕм. Ним шухăшсăр урамра чупса çўремелли ача вĕт эпĕ. Кунта авă çын пепкине сыхламалла. Ашшĕпе амăшĕ тав тума пĕлеççĕ-ши пĕрех хутчен?

Тепĕр кунне ирех çитрĕç кўршĕсем тĕпренчĕкне илме. Анук килне каясшăн мар. Амăшĕ тăхăнтартнă кофтине самантрах хывса пăрахрĕ те вăшт çеç сĕтел айне кĕрсе ларчĕ. Аллипе хăлаçланса ашшĕпе амăшне килне кайма хушрĕ.

– Юрĕ апла. Лисук, санпа выляса йăлăхман пулас пирĕн Анук. Кайран каçпа килĕпĕр, – терĕ Нина аппа ман çинелле пăхнă май.

Тарăхрăм. Ахаль те Анукран ывăннă эпĕ! Татах манпа хăварасшăн.

– Лисук, акă ача пăхнăшăн пирĕнтен парне, – тесе Куля пичче сумкинчен пуканепе пĕр пĕчĕк хутаç пĕремĕк кăларса пачĕ.

Савăннипе çунатсăрах вĕçсе каяттăм.

– Сирĕн Анука паян çеç мар, ыран та, тепĕр кун та пăхма хатĕр, – терĕм кўршĕсене ăсатнă май.

Вĕсем тухса кайсан Анук та сĕтел айĕнчен тухса юнашар вырнаçрĕ. Пĕремĕк çиме тытăнтăмăр. Шăпăрлан чăмлать-чăмлать те ахăлтатса кулать. Туслашрăмăр пулас унпа.



## Хӗле хатӗрленер-и?

Пиҫсе ҫитнӗ ҫимӗҫсене пуҫтарма та пуҫларӑмӑр ӗнтӗ. Халӗ вӗсене тӑварласа, консервласа хӗле хатӗрлеме вӑхӑт. Эпир те пӗр тӑхтамасӑр ҫак ӗҫе пуҫӑнар-ха.

### Кубаньле хатӗрленӗ салат

*Ку ҫимӗҫе янтӑлама 2 килограмм помидор (кирек мӗн тӗсли те юрать, хытӑраххисене ҫеҫ суйлӑр), 1 килограмм ҫурӑ купӑста, 700-800 грамм пылак пӑрӑҫ, 500-600 грамм пуҫлӑ сухан, 300 грамм тип ҫу, 150 грамм 9 процентлӑ уксус, ҫаврака пӑрӑҫ (15-20 пӗрчӗ), тӑвар (1 килограмм ҫимӗҫ валли 20 грамм чухлӗ) кирлӗ.*

Лайӑх ҫуса тасатнӑ ҫимӗҫсене тураса вӗтетететпӗр. Помидорпа пӑрӑҫа пысӑках мар татӑксем туса, сухана ҫурма ҫаврашкан ваклатпӑр. Купӑстана улӑм пӗрчи евӗр туратпӑр та тӑварпа пӑтрататпӑр.

Пур ҫимӗҫе те тип ҫупа, тӑварпа тата пӑрӑҫпа хутӑштаратпӑр. Унтан савӑта ҫулӑм ҫине лартса вӗреме кӗриччен пӑтрататпӑр. Уксус яратпӑр.

Ҫимӗҫе стерилизациленӗ кӗленчене вӗриллех тултаратпӑр та хупкӑчпа витетпӗр. Хыҫҫӑн савӑтсене тата 20 минут стерилизацилетпӗр. Пысӑк кастрюль тӗпне ҫемҫе ал шӑлли саратпӑр, вӗри шыв (65-70 градус) яратпӑр. Унтан кӗленчене лартатпӑр та каллех шыв хушатпӑр. Вӑл хупкӑчран 2-3 сантиметр аяларах пулмалла. Пысӑках мар ҫулӑм ҫине лартатпӑр. Вӗреме кӗнӗ хыҫҫӑн 20 минут иртсен савӑта шывран кӑларатпӑр та хупкӑчпа лайӑх хуплатпӑр.

### «Хуняма чӗлхи»

*Ӑна хатӗрлеме 3 килограмм хӑяр, 1 килограмм ҫурӑ помидор, 4 пылак пӑрӑҫ, 1 йӳҫӗ пӑрӑҫ, 100 грамм ыхра, 2 апат кашӑкӗ тӑвар, ҫур стакан сахӑр, 1 стакан тип ҫу, ҫур стакан 6 процентлӑ уксус кирлӗ.*

Хӑяра ҫавракан, пылак пӑрӑҫа тӑрӑхла вакламалла. Пур ҫимӗҫе те савӑта ярса тӑварпа, сахӑрпа тата ҫупа хутӑштармалла. Ҫулӑм ҫине лартмалла та вӗреме кӗнӗ хыҫҫӑн ҫур сехет тытмалла. Пиҫес умӗн, 5 минут маларах, уксус хушмалла. Унтан кӗленчесене тултарса хупламалла.

### Баклажанпа пылак пӑрӑҫ

*7 килограмм баклажан, ҫавӑн чухлех пылак пӑрӑҫ, ыхра, укроп илӗр. Маринад валли 1 литр шыв, ҫавӑн чухлех тип ҫу, 100 грамм 9 процентлӑ уксус, 1 стакан тӑвар кирлӗ.*

Баклажана тӑрӑхла касса тӑварпа пӑтратӑр. 1 сехет тытнӑ хыҫҫӑн шывпа чӳхӗр. Вӑрринчен тасатнӑ пылак пӑрӑҫа тӑрӑхла касӑр. Унтан ҫимӗҫсене пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн илсе вӗреме кӗнӗ маринада 5-6 минутлӑха ярӑр.

Кӗленчене кӑштах укроп, вӗтӗ туранӑ ыхра, унтан маринадран уйӑрнӑ баклажанпа пӑрӑҫ хурӑр. Тепӗр сийне каллех укроппа ыхра, унтан баклажанпа пӑрӑҫ. Ҫиелте укроппа ыхра пулмалла. Хыҫҫӑн кашни савӑта пӗр пек виҫепе маринад ярӑр та 15 минут стерилизацилӗр.

### Помидорпа купӑста

*Ҫак ҫимӗҫ валли хӑвӑра кирлӗ чухлӗ купӑста, помидор, кишӗр, пылак пӑрӑҫ, ыхра, лавр ҫулҫи, ҫаврака пӗрчӗллӗ пӑрӑҫ, укропӑн ешӗл пайне илӗр. Рассол хатӗрлеме 1 литр шыва 2 апат кашӑкӗ тӑвар, 3 кашӑк сахӑр песокӗ, 1 чей кашӑкӗ вӗтетнӗ аспирин кирлӗ.*

Купӑстана улӑм пӗрчи евӗр, пылак пӑрӑҫа вӗтӗ турамалла. Ҫуса тасатнӑ кишӗре теркӑпа хырмалла, ыхрана вӗтетмелле. Пӗтӗмпех пӑтратмалла.

Кӗленче тӗпне кӑштах лавр ҫулҫи, ҫаврака пӑрӑҫ, укроп ямалла. Унтан лайӑх ҫуса тасатнӑ помидора, ун ҫине купӑстаран хатӗрленӗ ҫимӗҫе хумалла. Ҫак йӗркепе савӑта тултармалла. Ҫиеле 3 таблетка аспирин хурса вӗреме кӗнӗ рассол ямалла. Кайран 15 минут стерилизацилемелле. Савӑтсене утиялпа витсе сивӗниччен тытмалла.

### Пан улми варенийӗ

*Варени валли 2 килограмм пан улми, 2 килограмм сахӑр песокӗ, 500 миллилитр шыв кирлӗ.*

Пан улмине лайӑх ҫуса тасатмалла, юрӑхсӑр тӗлӗсене касса пӑрахмалла. Сивӗ шывпа чӳхесе вӑтам татӑксем ҫине вакламалла. Варринчине уйӑрмалла.

Сахӑра шывпа хутӑштарса ҫулӑм ҫине лартмалла. Вӗреме кӗриччен пӑтратмалла. Унтан пан улми ямалла. Ҫулӑма пысӑклатмалла та пиҫиччен тытмалла. Тӗпне ан лартӑр тесе савӑта вӑхӑтран вӑхӑта кӑштах силлесе илӗр.

Варени хатӗррине пӗлме сӗткене сивӗ турилкке ҫине тумлатӑр. Вӑл айккинелле юхмарӗ тӗк – ҫимӗҫ хатӗр.

Варение стерилизациленӗ кӗленчене ямалла та хупкӑчпа хупламалла.

***Александр РАУ***

## Хӑшӗ усӑллӑрах?

**Юмах**



Пуранӑнӑ тет пӗр пахчара тӗрлӗ пахча-ҫимӗҫ. Питӗ туслӑ пулнӑ тет хӑйсем, пӗр- пӗрне нихӑҫан та кӳрентермен.

Пӗррехинче хайхисем тавлашу пуҫлаҫҫӗ. Хӑшӗ пуринчен те усӑллӑрах та тутлӑрах пулнине пӗлесшӗн.

– Эпӗ чи хитри! Чи тутли! Манран сӗткен те тӑваҫҫӗ! – терӗ Кишӗр ҫулҫисемпе чӑштӑртатса.

– Ҫук! Манран усси нумайрах! Эпӗ пур апатра та кирлӗ! – хирӗҫлерӗ Сухан.

– Мӗскер эсир! Эпӗ – ҫынсен чи юратнӑ ҫимӗҫӗ! Сухан, сана тасатакансем вара яланах куҫҫульленеҫҫӗ, – сас пачӗ Ҫӗр улми. – Кунта тавлашмалли те ҫук.

Вӗсем каҫченех вӑрҫӑннӑ пулӗччӗҫ ахӑртнех, анчах хайхисене кӳршӗ йӑран ҫинче ӳсекен ӑслӑ Купӑста самантрах лӑплантарчӗ те сӑмахне пуҫларӗ:

– Мӗншӗн тавлашатӑр тусӑмсем? Пирӗнтен кашниех хӑйне кура усӑллӑ. Суханах илер-ха. Вӑл ҫынсене макӑртать пулсан та унӑн паха енӗ пур. Вӑл сиенлӗ микробсене пӗтерет. Кишӗрпе Ҫӗр улминче вара витамин нумай. Эпир пурте ҫынсене кирлӗ ҫимӗҫсем, – терӗ.

Пурте шӑпланчӗҫ. Малашне те туслӑ пурӑнас тӗллевлине палӑртрӗҫ.

## Сӗнӳсем

**Тӗпелте тӗрлӗ ӗҫе пурнӑҫланӑ чухне ҫак сӗнӳсемпе усӑ курма сӗнетпӗр.**

•Сӗтпе вараланнӑ савӑта малтан сивӗ, унтан вӗри шывпа ҫумалла.

•Сыр ан типтӗр тесен савӑта сахӑр катӑкӗ хурӑр. Ҫиелтен турилккепе витӗр.

•Ҫӗнӗ ҫӗр улми хуппи лайӑх тасалтӑр тесен ӑна тӑвар хушнӑ шывра 15-20 минут тытмалла.

•Ҫӗр улмине ӑшалас умӗн салфеткӑпа типӗтсен вӑл тутлӑрах пулӗ.

•Вӗтетнӗ сухана ӑшалас умӗн ҫӑнӑхпа пӑтратӑр. Ун чухне вӑл ҫунмасть, кирлӗ пек хӗрелет.

•Пан улми касӑкӗсем ан хуралччӑр тесен вӗсене кӑштах тӑвар хушнӑ шыва ямалла.

•Кӑмакана лартнӑ кукӑль тӗпӗ ҫунса ан кайтӑр тесен форма айне тӑвар сапмалла.

•Услам ҫӑвӗпе маргарина ҫутӑ яман савӑтра упрасан лайӑхрах.

•Пулла е какая ӑшалас умӗн ал шӑллипе типӗтмелле. Ун чух вӗсене илемлӗ тӗс ҫапӗ.

•Ӑшаланӑ пулӑ тутлӑрах пултӑр тесен ӑна сӗтре 5-10 минут тытмалла, кайран ҫӑнӑхпа йӑваласа вӗреме кӗнӗ тип ҫупа ӑшаламалла.

## Тӗпеле тирпейлетпӗр

Кил-ҫуртра, уйрӑмах тӗпелте яланах тирпейлӗ те таса пулмалла. Ун чухне пирӗн кӑмӑл-туйӑм та ҫӗкленет. Тирпейлӗ пӳлӗмре апат хатӗрлеме те кӑмӑллӑ мар-и-ха? Апла тӑк ҫанӑсене тавӑрса тӗпел кукрине илем кӗртме тӑрӑшар.

Чи малтан ҫакна ас тумалла: апат ҫинӗ хыҫҫӑн чашӑк-тирӗке ҫийӗнчех ҫуса хумалла. Кашнинчех ҫапла тусан тӗпелте тирпейлӗрех пулӗ.



Апат юлашкисене пуҫтарса сивӗтмӗше хумалла, сӗтеле нӳрӗ ҫӗтӗкпе сӑтӑрса тасатмалла. Раковинӑна та ятарлӑ шӗвекпе ҫумалла. Урайне шӑлмалла, унтан ҫумалла.

Пухӑннӑ ҫӳп-ҫапа урама тухмассерен кашнинчех илсе тухмалла. Унсӑрӑн тӗпелте ырӑ мар шӑршӑ сарӑлма пултарать.

Чашӑк-тирӗк ҫӑвакан ҫӗтӗке тата ал шӑллисене тӑтӑшах улӑштармалла.

Уйӑхра пӗрре сивӗтмӗше лайӑх ҫуса тасатмалла, унӑн пайӗсене кӑларса ятарлӑ шӗвек хушнӑ шывпа ҫумалла.

Тӗпелти шкапсемпе ҫӳлӗксене нӳрӗ ҫӗтӗкпе сӑтӑрмалла, унтан типӗтмелле. Шкапри япаласене йӗркипе типтерлӗн лартмалла, кирлӗ маррисенчен хӑтӑлмалла. Сивӗтмӗшри апат-ҫимӗҫе те «тӗрӗслеме» манмалла мар.

Тӗпелти пур япала та хӑйӗн вырӑнӗнче пултӑр. Кӗрпе, макарон таврашне уйрӑм шкапра тытмалла. Сахӑра, тӑвара, чей-кофене те ҫакӑнтах хумалла. Тӗрлӗ вак-тӗвеке хупкӑчпа хупланакан пластмасс савӑта хурсан меллӗ. Ун чух нимӗн те ҫухалмӗ.

*Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатӗрленӗ.*

Владислав КРАПИВИН

# Телейсĕр Çил



калав

Çил икĕ хутлă кивĕ çуртăн стени çумĕнче çакăнса тăракан алюмини пăрăхра пурăнать. Вăл унта тахçанах тĕпленнĕ – ун чухне пăрăхĕ те хальхи пек тутăхпа витĕнмен, вĕр-çĕнĕскер хĕвелпе йăлтăртатнă. Çурт йĕри-тавра ялти пек пĕчĕк пўртсем пулнă, халĕ пысăк та капмар хваттерсем лараççĕ.

Çавăнта кун-кунлакан Çил ыттисемпе танлаштарсан лăпкăрах. Лешсем вара çĕр çийĕн ирĕклĕн вĕçеççĕ, çўллĕ йывăçсене ава-ава антараççĕ. Хайхискер вĕсене хăваласан та çитеймест. Ăна, асфальт çинчи типĕ çулçăсене чăштăртаттарса тустараканскере, Алик Чăштăркка ят пачĕ.

Чăштăркка питĕ киревсĕр иккен. Пысăк Çилсемпе вĕçсе çўрейменрен яланах туллашать, улать. Çынсене те сиен кўме хăять – алăри хаçата туртса çурать, уçă чўречесене шаплаттарса хупать, урамри тусана вăйĕ çитнĕ таран сапалама тăрăшать. Анчах çакă нумая пымасть, вăл часах ывăнать те хăй вырăнне кĕрсе лăпланать.

Сивĕ кунсенче вара «килĕнче» çиллессĕн те кичеммĕн улать. Темиçе тĕлтен шăтнă кивĕ пăрăхра шăннипе çапла хăтланать ĕнтĕ вăл.

Алик пичĕпе пăрăх çумне лăпчăнса Çилĕн тунсăхлă сассине итлет. Часах ун патне кўршĕ хĕр ачи Женька чупса çитет те вĕсем иккĕшĕ Чăштăрккана тăнласа киленеççĕ.

Пĕррехинче харсăр Чăштăркка Аликсен уçă кантăкĕнчен вĕçсе кĕрсе алхаснă. Чўрече янахĕ çинчи сăрă кĕленчине тўнтерсе аппăшĕн чертежне варalană. Çакăншăн хĕр ача шăллĕнех айăпларĕ. Çил çапла каварлă пулнине ăнлантараймăн çав ăна. Тепрехинче Чăштăркка Алика кулянтарчĕ – аллинчи кăвак тĕслĕ шарне туртса илчĕ те çўлелле çĕклерĕ. Тепĕр самантран ăна çутă пралукĕсен çумне çапса çурчĕ.

– Мĕншĕн вăл çав тери киревсĕр-ши? – шухăша путрĕ Женька.

– Пĕчĕк анчăк пекех вăл, – сăмах хушрĕ Алик. – Пысăк йытăсем ырă-çке, пĕчĕккисем вара яланах урараn пырса çыртасшăн.

– Эй! Телейсĕр Çил! – пăрăхран черетпе кăшкăрчĕç вĕсем. Чăштăркка самантлăха алхасма чарăнчĕ. Унтан хăйне çак сăмахсем кўрентернĕрен çиллессĕн уларĕ.

## Çўпĕ

Хĕллехи пĕр кун Алик, Женька тата Валерка шкултан таврăнатчĕç. Арçын ачасем Женькăна çунашкапа туртса пыраççĕ, сумкисене те ăнах тыттарнă. Капла çунашкана сĕтĕрме меллĕрех-çке. Ара, юлашкинчен физкультура урокĕ пулчĕ те питĕ хаваслă халĕ çамрăксем.

– Эх, Валерка еплерех ту çинчен ярăнса анчĕ! Кайран юр ăшне пуçĕпех кĕрсе ўкрĕ! – аса илчĕ Алик кула-кула.

Пурте савăнăçлăн ахăлтатрĕç. Валерка та тулли кăмăлтан кулчĕ. Вăл ахаль те хавас ача-ха, нихăçан та тунсăхламасть. Женька ав, кула-кула юр çинех тўнчĕ. Сумкисем те айккинче выртаççĕ.

Чăштăркка вĕсен хаваслă куллине илтсен чăтаймарĕ – котельнăй патне вĕçрĕ. Çĕр çинчен темиçе кăмрăк пĕрчине çўлелле çĕклерĕ те хăйне тахçанах тарăхтарса çитернĕ ачасем енне вирхĕнчĕ. Пăрăхран кăшкăрса мăшкăллаканскерсене тавăрмаллах-çке унăн.

Лешсем урокри самантсене аса илсе каллех ăш хытиччен кулчĕç. Унтан тин малалла утрĕç. Варкăш çил сасартăк пит-куçа чĕпĕтсе илнине те сисмерĕç хаваслăскерсем. Татах шўтлерĕç. Анчах Алик аллипе тăрăшсах куçне сăтăркаланине асăрхасан лăпланчĕç.

– Мĕн пулчĕ, Алик? – тĕлĕнсе ыйтрĕ тусĕнчен Женька.

– Çўпĕ кĕчĕ, – хуравларĕ кăмăлсăрланнă арçын ача.

– Ыраттарать-и? – хĕрхенчĕ Валерка. Лешĕн куçĕнчен куççуль шăпăртатать, инкек тўснĕскерĕн йĕппе тирнĕ пек ыратать пуль ĕнтĕ. Валерка ним каламасăрах ăнланчĕ Алика.

– Аллупа ан тыт! Атя хамах пăхам, уç-ха куçна, – терĕ Женька.

Ăçта унта! Алик куçне самантлăха та уçаймасть, алли хăех çав тĕле пырать-çке. Никама та тыттарас çук ăна. Ахаль те тўсме çук ыратать.

– Ан çывхар! – тарăхрĕ вăл. – Пĕрре чышсанах таçта çити вĕçсе кайăн!

– Ну, мемме те эсĕ! Хăравçă!

Кĕтмен çĕртен Алик сумкине илчĕ те Женькăна çапасшăн пулчĕ. Анчах хăрах куçĕпе çеç пăхайнăран лектереймерĕ, алли сулăнса хăйĕн уринченех кĕрĕслеттерчĕ. Женька тўрех айккинелле пăрăнчĕ.

– Хăравçă! Хăравçă! – тесе йĕкĕлтерĕ.

– Ну, çитĕ ĕнтĕ сире... – терĕ Валерка тусĕсене лăплантарасшăн тăрăшса. Хăй вăл никама та кўрентерсе курман. Кам та пулин вăрçăннине те чăтма пултараймасть. Ун пек чухне вара сăнĕ халь-халь йĕрсе ярас евĕр улшăнать.

– Сана мĕн ĕç? – самантрах вĕчĕрхенчĕ Женька. – Шăп кăна тăр-ха.

Алик куçне пĕр чарăнми аллипе сăтăрчĕ. Çапах Женькăна сăнарĕ. Хыççăн чупас-ши е чупас мар-ши тесе шухăшларĕ.

Валерка çунашкине илсе çулпа майĕпен утрĕ. Тусĕсем пĕр-пĕрне кўрентернине илтес те, курас та килмерĕ унăн.

Алик килне çитсен тахçанччен куçне шывпа çурĕ. Çўппи вара тинех тухрĕ. Апла пулсан та темшĕн унăн кăмăлĕ çĕкленмерĕ. Урок тума ларсан та тунсăх пусрĕ. Икĕ хăнăхтару пурнăçласанах ручкине сĕтел çине пăрахрĕ. Кашнинчех тусĕсемпе килти ĕçсене хатĕрлетчĕ-çке вăл. Вĕсемсĕр вара нимĕн тума та кăмăл çук.

Женькăна та урăх çилленмерĕ вăл. Пўлĕмре унталла-кунталла утнă хыççăн пальтопа шапкине вăр-вар тăхăнчĕ те урама тухрĕ.

## Çиле хупса хума пулать-и?

Женька та кунтах иккен, Алик ăна тўрех курчĕ. Вăл Валерка килĕ еннелле утать.

Арçын ача нумай шухăшласа тăмарĕ, хăй те çавăнталла таплаттарчĕ. Женька çулăн пĕр айккипе, Алик вара теприпе утрĕ. Пĕр-пĕрне курмăш пулчĕç.

– Эпĕ Валерка патне каятăп-ха, – хăйпе хăй калаçнăн мăкăртатрĕ хĕр ача.

– Эсĕ ăна кирлех тесе шухăшлатăн-и? – терĕ Алик юриех Женька çине пăхмасăр.

– Ун патĕнче кĕнекене манса хăварнăччĕ эп, – хуравларĕ лешĕ пĕлĕте сăнанă май.

Алик тек унпа калаçас темерĕ. Пырсан-пырсан вĕсем çума-çумăнах утрĕç.

– Çўппў тухрĕ-и куçунтан? – шăппăн ыйтрĕ Женька.

– Ăхă, – ассăн сывларĕ Алик куçне алсишĕпе сăтăрнă май.

Акă вĕсем леш икĕ хутлă кивĕ çурт патне çывхарчĕç. Кĕтмен çĕртен Алик хайхи тутăхнă пăрăха чышкипе çапрĕ. Женька шартах сикрĕ.

– Йăлтах ун пирки пулчĕ.

– Чăштăркка айăплă-и?

– Паллах. Вăл ман куçа çўпĕ кĕртрĕ-çке.

– Вăт, киревсĕрскер! Питĕрсе хурасчĕ ăна кунта!

Иккĕшĕ те пăрăха сăнарĕç.

– Епле питĕрĕн-ха? Вăл пур пĕр тухать унтан вăйлăскер, – терĕ Алик.

– Йывăç пăкăсемпе икĕ енчен хупламалла та, ĕçĕ те пĕтнĕ, – хавхаланса калаçрĕ Женька.

– Айккинчи шăтăкĕсем пур пĕрех юлаççĕ-çке.

– Çапла çав, – килĕшрĕ тусĕпе хĕр ача.

– Пурăнтăрах, – терĕ Алик. – Халь тин вăл тек сиен тăваймĕ. Кусри çўпĕ те тухрĕ...

Калаçăва илтекен Чăштăркка хуллен уласа илчĕ.

Ачасем уттине хăвăртлатса тусĕ патне вĕçтерчĕç. Валерка вĕсемсĕр тунсăхланă ĕнтĕ ахăртнех.

*Нина ЦАРЫГИНА куçарнă.*

# Хаваслă 2014 самант

## «Ухсай Яккăвĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ»

Пуç ватмăшра ыйтусене сулахайран сылтăмалла тĕрĕс хуравласан паллă тунă йĕр тăрăх çӳлтен аялалла Ухсай Яккăвĕн чăн хушаматне пĕлме пулать.



**Ыйтусем:**
1. Ухсай чĕлхинчи ытарлă каларăш:
«Çăкăр кăвапи тавра
Çаврăнса çӳрет ...».
2. «Çăкăр – çĕр ачи,
Çăкăр – мул ...».
3. Паллă хайлавĕсенчен пĕри.
4. Ухсай çырнă трагеди.
5. Çырассăм ман киле пуçларĕ
... тутар пекех хитре. («Мана тутар сăнарлă теççĕ» сăвăран)
6. Чăваш чĕлхи хыпарĕ çитнĕ тинĕс урлă
Тĕтрелле ...а пĕррехинче. («Атте-анне» поэмăран)
7. Яков Ухсай мăшăрĕ çуралнă ял.
8. Хĕрĕ.
9. Ухсай ячĕ.

*Елена ЕГОРОВА.*

Етĕрне районĕ,
Ирçе шкулĕ.

## Сăмах каçмăш

**Сылтăмалла:** 3. Геометри фигури. 7. «Шофер хваттерĕ». 8. Кăнтăрти çимĕç. 10. Нимĕçсен грузовикĕ. 12. Попугай тĕсĕ. 13. Вĕренӳ предмечĕ. 14. Тапăну. 16. Çурт кăшкарĕ. 18. Вăл сцена çинче вылять. 19. Çĕре кăпкалатмалли хатĕр. 20. Кулач çитерекен. 22. «Нарспи» поэмăри сăнар. 24. Авиаконструктор та, политик та. 25. Пĕчĕк жираф. 28. Ăна урайне сараççĕ. 30. Йĕлтĕр çулĕ. 31. Уйăх ячĕ. 32. Европăри çĕр-шыв. 33. Кавказ тăрăхĕнчи çĕр-шыв. 34. АПШри штат.

**Аялалла:** 1. Пушă. 2. Тĕрлĕрен техникăна юсакан. 3. Гимнаст тум-тирĕ. 4. Финляндири паллă кӳлĕ. 5. Çавана хăйракан. 6. Апат-çимĕç. 9. Итали халăхĕн ташши. 11. Çĕпĕрти хула. 15. Пĕр-пĕр япалапа вăхăтлăха усă курни. 17. Арканса кайнă Совет çĕр-шывĕ (кĕскен). 21. Молдави кӳрши. 23. «Ветер с моря дул» юрра шăрантаракан. 26. Çар званийĕ. 27. Атăçăн ĕç хатĕрĕ. 29. Кăнтăрти Анна аппа хули. 30. Кĕвĕ инструменчĕ.



*Николай КРАСНОВ.*

### Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр

1. Аçупа аннӳне хисепле ... .
2. Ултавпа инçе ... .
3. Ырă ĕç укçаран ... .
4. Юлташу пултăр ... .
5. Куракпа чакакăн ... .
6. Кайăк темĕн чухлĕ çӳле ... .
7. Ĕнесĕр пурнăç ... .
8. Ырă ĕç хăйне ... .

### Ытлашши сăмах

1. Украина, Китай, Вăрнар, Франци.
2. Ананас, абрикос, хăмла çырли, кокос.
3. Лиза, Лида, Лена, Мила.
4. Максим, Саша, Митя, Миша.
5. Лаша, ут, тилĕ, урхамах.
6. Çĕмĕр, купала, ват, аркат.

### Тупмалли юмахсем

1. Пĕр пĕркенчĕк пĕтĕм çĕре хупласа илнĕ.
2. Тулта – купа, пӳртре – шыв.
3. Пĕчĕк çеç кусăл, эреветлĕ-теветлĕ, пурçăн йĕмлĕ, ука тухьяллă.
4. Кĕлеткинчен хӳри вăрăм.
5. Каçхине ухутана тухать, кăнтăрла çывăрать.
6. Вăкăр мар – мăйракаллă, ĕне мар – сĕт парать, старик мар – сухаллă.

### Авторĕсем камсем-ши?

1. Мĕншĕн Петĕр хĕпĕртенĕ,
Пичĕ-куçĕ йăл кулать?
Иртенпе лара пĕлмесĕр
Уткалать те чупкалать.

2. Авалтан эпир юратнă
Пархатарлă Атăла,
Ун шывне нумай хумхатнă
Тăвалла-аналла.

3. Салам сана, сап-сарă тумлă,
Паян та çутă кĕркунне!
Кучченеçпе сĕтел хаць тулăх,
Савăнтарать пире парне.

4. – Вăхăта упрамалла, –
тет Роман васкаnă май. –
Вак ĕçрен хăтăлмалла,
пысăк ĕç те пит нумай.

*Маша ОРЛОВА.*

Йĕпреç районĕ,
Çăкалăх.

## Сăмах футболĕ

"Тетте"

| | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | а | р | к | н | ш | р | р | ъ | у | м | л | н | о | ш | к | т | у | п | ă | к | м | л | о | н | д | о | н | |
| | й | ч | л | о | т | и | а | а | п | и | а | ё | п | о | о | а | р | а | п | а | и | и | у | к | о | у | ў | |
| | ц | к | н | л | ш | и | к | и | к | р | ш | л | н | р | к | м | в | ё | р | ш | ё | н | л | ш | ш | п | п | |
| | н | г | ш | щ | з | у | э | т | л | с | а | г | к | п | у | о | о | к | п | а | р | ă | с | а | ц | ă | л | |
| | х | ъ | ч | а | л | р | ă | к | б | о | о | н | щ | о | ц | р | ы | б | ç | е | к | р | ё | н | е | л | е | |
| | ф | ы | и | ă | ў | щ | щ | р | е | а | у | а | д | р | е | а | в | у | п | а | п | а | и | г | н | х | н | |
| | я | ч | н | с | м | ш | ё | л | д | т | т | р | о | у | н | т | л | а | п | л | а | н | д | и | ш | а | ч | |
| | а | р | г | л | в | ш | з | о | т | л | р | в | н | ы | к | у | п | т | е | т | е | а | п | н | ё | р | ё | |
| р | с | и | и | а | ч | ф | т | т | р | а | к | а | | | | у | т | а | р | с | ё | ç | ў | д | д | р | к | а |
| а | и | г | с | в | р | а | о | у | а | с | п | о | р | | т | е | т | т | е | к | е | т | щ | у | ă | ю | п | л |
| л | у | а | х | м | м | с | л | а | к | ю | ё | р | т | | ш | р | а | р | о | р | а | л | а | с | ă | р | ă | а |
| | ь | ш | а | е | з | и | е | ш | т | р | р | т | р | н | у | н | ц | и | е | р | ç | ё | ў | б | ç | т | ă | |
| | р | у | н | ш | ч | р | т | а | о | а | р | х | и | м | е | д | а | т | т | я | ă | о | ç | е | а | ă | ç | |
| | н | ё | л | к | я | и | ш | л | р | л | л | н | п | ё | е | б | е | е | г | д | ç | ы | ă | ў | р | ё | ў | |
| | ш | д | о | к | и | й | ă | м | р | а | а | а | ў | ш | р | у | м | д | ш | а | ё | п | к | у | т | н | ё | |
| | щ | п | р | в | я | о | з | д | о | р | г | в | р | р | л | ь | т | е | а | н | ç | ў | ç | ё | с | т | ў | |
| | к | ă | л | к | а | н | й | л | с | р | ь | ă | т | ё | е | ў | и | р | о | л | а | р | и | с | а | ё | ç | |
| | г | о | х | э | ё | р | н | п | р | ă | о | й | и | в | р | и | н | и | т | к | а | к | ш | а | м | о | р | |
| | л | з | к | е | п | л | и | г | ш | ă | р | ă | х | т | р | а | к | т | о | р | и | с | т | а | л | в | и | |

"Самант"

**1.** 1. Ачасен кану лагерĕ. 2. Çулталăкри пĕрремĕш уйăх. 3. Монгол империйĕн пĕрремĕш чаплă ханĕ. 4. Сухан сăтăрçи. 5. Географи карттисен пуххи. 6. Вырăсла-чăвашла словарь авторĕ. 7. Шыв çийĕн вĕçекен кайăк. 8. Чи пысăк юхан шыв. 9. «Мартин Иден» роман авторĕ. 10. Вăл пĕччен çӳремест. 11. А.Кăлкан хайлавĕ. 12. Том Сойерпа Гекльберри Финн çинчен çырнă Твен ячĕ. 13. Шапа чĕлхи. 14. Тĕп Африкăри юхан шыв. 15. Кинопреми. 16. Вăл пиçсен хĕрелет. 17. Çыннăн хаваслăхне палăртакан. 18. Çырăвăн виçĕ тĕсĕнчен пĕри. 19. Кĕрпе. 20. Латви тĕп хули. 21. Тусем çинчи ял.

**2.** 1. Пукане те, упа çури те. 2. Унăн пултарулăхĕпе паллашнă хыççăн П.Хусанкай «Тухăç кĕввисем» ярăм хайланă. 3. Лаврентий Таллеров çуралнă ял. 4. Курăкран лутра, çанталăкпа тан. (туп.юм.) 5. Санта-Клаус çĕр-шывĕ. 6. Инди çынни. 7. Чиркӳллĕ ял. 8. «Салампи» авторĕ. 9. Н.В.Гоголĕн хăрушă повеçĕ. 10. Вырăс юмахĕсенчи сăнар. 11. К.В.Ивановăн вилĕмсĕр поэми. 12. «Хура çăкăр» Микулайĕ. 13. Карап çинчи повар. 14. Чăваш юптаруçи. 15. Тĕнчене шыв илес умĕн вăл карап ăсталаса ĕлкĕрнĕ. 16. Чăваш ялĕсенче нумай ӳсет. 17. Унпа çăнăх тасатаççĕ. 18. Авалхи грек математикĕ, физикĕ тата инженерĕ. 19. Икар ашшĕ. 20. Республика Пуçлăхĕн М.В.Игнатьевăн мăшăрĕ. 21. Чечек пахчин «çăлтăрĕ». 22. Шупашкар мĕнле юхан шыв хĕрринче вырнаçнă?

*Дина МАЙОРОВА.*